ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧЕ

1952 çул Февраль 27 юнкун
№ 42 (8694)
Хакĕ 20 пус.
34-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ. К. А. Федин писателе Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăласси çинчен (1 стр.).
Совет Союзĕ тăрăх (1 стр.).
А. Солдатова, В. Воронин, Ф. Барышев.—Автомашинăсемпе туллин усă курмалли майсем çинчен (1 стр.).
Совет Правительствин Итали Правительствине панă нота (2 стр.).
Колхоз председателĕсен республикăри канашлăвĕ. М. Долгов. — Колхоз стройĕн аслă вăйĕ; **П. Григорьев.** — Артель хуçалăхĕ тĕрекленет; **А. Моисеев.**— Ялхуçалăхĕнче малта пыракансенчен вĕренмелле (2 стр.).
Н. Егоров. — Отрядсенчи пионерсен сборĕсем çинчен (2 стр.).
Чурачăк районĕнчи «Совет» колхозран килнĕ çырусем. М. Воробьев. — Коммунистсем малти ретре; **Н. Никитин.** — Тăван çĕршыв хушнă пек ĕçлессишĕн (3 стр.).
М. Огородников. — Чысла тивĕç (3 стр.).
Халăх демократи çĕршывĕсенче (4 стр.).
Пĕтĕм Индири Мир Совечĕн ларăвĕнче (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).

Ялхуçалăхне малалла аталантармалли программа

Пилĕк çул каялла, 1947 çулхи февралĕн 28-мĕшĕнче, ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн февральти пленумĕ «Ялхуçалăхне вăрçă хыççăнхи вăхăтра вăйлатмалли мерăсем çинчен» йышăннă историллĕ решени пичетленсе тухрĕ. Ленин—Сталин партийĕ совет халăхне çĕрĕçĕпе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе лайăхлатмалли тата малалла хăвăтлăн аталантармалли, ĕççыннисен пурнăç шайне ÿстермелли большевикла программăпа хĕçпăшаллантарчĕ.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн пленумĕ çакăн пек задача лартрĕ:

«Халĕ ĕнтĕ, мирлĕ строительство ĕçне куçнă хыççăн, пирĕн партипе государство умне каллех питĕ пысăк, вăраха ямасăр татса памалли питĕ кирлĕ задача—ялхуçалăхне вăйлатса ярас задача, ăна хамăрăн халăх валли питĕ нумай апат-çимĕç, çăмăл промышленность валли питĕ нумай чĕртавар хатĕрлесе пама, государство валли кирлĕ чухлĕ апат-çимĕçпе чĕртавар резервĕсем пухса хатĕрлеме çителĕклĕ таран вăйлатса ярас задача тухса тăчĕ».

Çак задачăна кĕске срокра пурнăçлама пленум уйрăм ĕçсем туса ирттерме хушса хăварчĕ: партипе совет тата ялхуçалăх органĕсен ялхуçалăхне ертсе пырас ĕçе лайăхлатмалла; ялхуçалăх артелĕн Уставне пăснисене, ĕçкунĕсене тĕрĕс мар расходланине, колхозсен обществăллă çĕрĕсене салатнине, колхоз харпăрлăхне саратса пĕтернине, ялхуçалăх артелĕн ĕçĕсене тытса пырас ĕçĕн демократиллĕ никĕсĕсене пăснисене вĕçне çитиех пĕтермелле; колхозниксен ĕçне организацилессинчи тата ĕçшĕн тÿлессинчи çитменлĕхсене пĕтермелле; машина-трактор станцисен ĕçне татăклăнах лайăхлатмалла; МТС-сенче, колхозсенче тата совхозсенче опытлă, лайăх вĕренсе хатĕрленнĕ кадрсем çитменнине кĕске срокра пĕтерес тесе, вĕсен квалификацине ÿстерес ĕçе анлăн организацилемелле, ялхуçалăх специалисчĕсемпе тĕрĕс мар усă курнине пĕтермелле; ялхуçалăхне çĕнĕ тракторсемпе, ытти машинăсемпе пуянлатмалла, кирлĕ чухлĕ удобрени тата горючи хатĕрлесе памалла.

Пленум решенийĕ совет çыннисене социализмлă государствăн, колхоз стройĕн хăватне тепĕр хут яр-уççăн кăтартса пачĕ, ялхуçалăхĕнче çĕнĕ çитĕнÿсем тума хавхалантарчĕ. Совет халăхĕ мĕнпур тимлĕхпе ялхуçалăхне юсаса вăйлатма, ăна малалла аталантарма тытăнчĕ. Рабочи класс колхозлă яла пулăшас ĕçе икшĕ хут ÿстерчĕ. Тракторсем, комбайнсем тата ытти ялхуçалăх машинисем туса кăларасси хăвăрт ÿсее пыма тытăнчĕ. Пленум решенине пурнăçлассишĕн совет хресченĕсем пĕтĕм вăя хурса кĕрешрĕç.

Пленум иртнĕ хыççăн пĕр çултанах пирĕн социализмлă ялхуçалăхĕ чаплă ĕçсем туса ирттерчĕ. Тĕштырăсен тата ытти нумай культурăсен тухăçлăхĕ 1948 çул тĕлне вăрçăчченхи шая çитрĕ.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн февральти пленумĕ пулнăранпа пилĕк çул иртнĕ тĕле ялхуçалăхĕ пысăк çитĕнÿсем турĕ. 1951 çулта 7 миллиард та 400 миллион пăт тĕштырă пухса кĕртнĕ, ытти культурăсен тухăçлăхĕ те пысăк пулнă. Тырпул, техникăллă культурăсем, нумай çул тата пĕр çул ÿсекен курăксем, тымарçимĕç, силос культурисем акакан çĕр лаптăкĕ ÿссе пынă.

Иртнĕ çулта ялхуçалăхĕн техникăллă никĕсĕ малалла тĕрекленчĕ. Пĕлтĕр пирĕн çĕршыври ялхуçалăхĕ, 15 лаша вăйлĕ трактор çине куçарса шутласан, 137 пин трактор, 53 пин комбайн, 59 пин автомашина, ытти машинăсемпе орудисем 2 миллион илнĕ.

Ялхуçалăхĕ техникăпа пуянланса пыни колхозсемпе совхозсенчи ĕçсене механизацилеме май пачĕ. Машина-трактор станцисем 1951 çулта, унчченхи çулпа танлаштарсан, 19 процент чухлĕ ытларах ĕçсем тунă Иртнĕ çул МТС-сем колхозсенчи уй-хир ĕçĕсенчен виçĕ пайĕнчен икĕ пайне ытла пурнăçланă. Ялхуçалăхне электрификацилес тĕлĕшпе пысăк ÿсĕмсем тунă.

1951 çулта колхозсемпе совхозсенче обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç малалла ÿссе пынă. Вĕсем тытакан выльăх-чĕрлĕх йышĕ çĕршыври выльăх йышĕн пысăк пайĕ пулса тăрать.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче Чăваш республикин ялхуçалăхĕ те ăнăçлă аталанчĕ. Вăйлă тырпул çитĕнтерекен, йышлă та тухăçлă выльăх-чĕрлĕх усракан колхозсен шучĕ çулсерен ÿссе пырать.

Колхоз председателĕсен республикăри канашлăвĕ çакна палăртрĕ: Сталин юлташ патне янă çырури обязательствăсене пурнăçласа, республикăри колхозлă ялăн ĕçчĕнĕсем, МТС работникĕсем çĕрĕçĕ тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе 1951 çулта çĕнĕ ÿсĕмсем турĕç; колхозсем организаципе хуçалăх енĕпе малалла тĕрекленчĕç; республика палăртнă вăхăтран икĕ уйăх маларах государствăна тырă парса татрĕ; чылай колхозсем обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх планпа пăхнинчен ытларах выльăх усраççĕ.

Çав çитĕнÿсене тума вырăнти партипе совет органĕсен ĕçне ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ кăтартса панă пек улăштарса çĕнетни чылай пулăшрĕ. Ялти партиллĕ-политикăллă ĕçе парторганизацисен малашне тата ытларах вăйлатса пырас пулать, ку тĕлĕшпе партин Центральнăй Комитечĕн февральти пленумĕн кăтартăвне вĕçне çитиех пурнăçламалла.

Пленум çапла кăтартса панă: **«Районсенчи... партипе совет органĕсен ертсе пыракан работникĕсен колхозсенче тăтăшах пулмалла, политикăллă тата организациллĕ-партиллĕ ĕçе туса пымалла, колхозниксемпе калаçусем ирттермелле, колхозсен пухăвĕсене ирттермелле, партин пуçламăш организацийĕсенче партиллĕ-политикăллă ĕçе йĕркелесе ярас тĕлĕшпе ĕçлемелле».** Парти организацийĕсен ялхуçалăх артелĕн Уставне пăсакансемпе çивĕччĕн кĕрешмелле, колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен хăвăрт вăйлатас, колхозниксене вĕрентсе воспитани парас ĕçе организацилесе пымалла.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ пирĕн республика ялхуçалăхĕ умне çакăн пек задача кăларса тăратрĕ; çитес ик-виçĕ çул хушшинче кашни гектартан вăтам шутпа туса илекен тĕштырă тухăçлăхне 18 центнера çитермелле, техникăллă культурăсен, çавăн пекех ытти мĕнпур культурăсен тухăçлăхне чылай ÿстермелле; обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне малалла ÿстерсе пымалла.

Çак пысăк задачăна пурнăçлама партипе правительство мĕн кирлине йăлтах туса параççĕ. Чăваш республикинчи МТС-семпе колхозсем государствăран çултан-çул ытларах машинăсем илсе тăраççĕ. Правительство йышăннă тăрăх, пирĕн республика 1952 çулта ялхуçалăх машинисем нумай илет.

Вырăнти партипе совет тата ялхуçалăх органĕсен тивĕçĕ—государство пулăшăвĕпе тĕрĕс усă курасси пулать, вĕсен машинăсемпе ĕçлессине хирĕçле шухăша татăклăн пĕтересшĕн кĕрешмелле, колхозсемпе МТС-сенчи резервсене, ĕç вăйне пĕтĕмпех обществăллă хуçалăха малалла вăйлатса пыма мобилизацилемелле. Наука çитĕнĕвĕсене, малта пыракансен опытне производствăна анлă кĕртсе пымалла, виçĕсуллăх агрозоотехника курсĕсен ĕçне лайăхлатмалла. Халĕ пур районсенче те суракине тимлĕ хатĕрленмелле, суракине кашни колхозăн, МТС-ăн большевикла кĕтсе илмелле, колхозсенче обществăллă выльăх-чĕрлĕхе тĕрĕс-тĕкел пăхса усрамалла.

Ялхуçалăхĕнчи çĕнĕ çитĕнÿсемшĕн пирĕн республика тăванла Мари тата Мордва республикисемпе ăмăртса ĕçлет. Парти организацисен мĕнпур колхозниксене, механизаторсене, ялхуçалăх специалисчĕсене социализмлă ăмăртăва хутшăнтармалла. Ăмăртура мала тухассишĕн кĕрешесси—кашни колхозникăн хисеплĕ тивĕçĕ.

Совет халăхĕ ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн февральти пленумĕ пулнăранпа пилĕк çул тултарнине коммунизмăн аслă стройкисем анлă сарăлса пынă вăхăтра, пĕтĕм тĕнчере çирĕп миршĕн хăватлă кĕрешÿ çĕкленнĕ тапхăрта палăртать. Пирĕн Тăван çĕршывăн производительнăй вăйĕсем нихçанхинчен те хăвăртрах ÿссе пыраççĕ. Çакă вăл мир тĕрекне çирĕплетет, коммунизм патне хăюллăн пыма май парать. Мĕнпур халăх хуçалăхĕпе пĕрле социализмлă ялхуçалăхĕ те хăватлăн аталанать, ял ĕçчĕнĕсем хăйсем умне партипе правительство лартнă тĕп задачăна ăнăçлă татса парас тесе ырми-канми ĕçлеççĕ.

Партин Центральнăй Комитечĕн февральти пленумĕ йышăннă решени ялти парторганизацисен, колхозсен, мĕнпур ялхуçалăх работникĕсен кĕрешÿри программи пулса тăрать.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ

К. А. ФЕДИН ПИСАТЕЛЕ ĔÇЛĔХ ХĔРЛĔ ЯЛАВ ОРДЕНĔПЕ НАГРАДĂЛАССИ ÇИНЧЕН

Çуралнăранпа 60 çул тултарнă май, **Константин Александрович ФЕДИН** писателе илемлĕ литература енĕпе уйрăмах паха ĕçсем тунăшăн **Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав** орденĕпе наградăлас.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ Н. ШВЕРНИК.
СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1952 çулхи февралĕн 25-мĕшĕ.

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

Мускав хулинчи стахановецсен ĕçри хастарлăхĕ

Столицăри ĕççыннисем Верховнăй Советăн сессине производствăра çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илеççĕ.

Автомобильсем тăвакан Сталин ячĕпе тăракан заводри ултçĕр ытла рабочи, мастер тата инженер электроэнерги расходлас ĕçе контроллесе тăма комплекслă бригадăсене пĕрлешнĕ. Ĕçре пысăк çитĕнÿсем тунă. Халĕ кашни 13-мĕш грузовикĕн деталĕсене перекетленĕ электроэнергипе туса хатĕрлеççĕ.

Литейщиксем тăватă кун каялла, Верховнăй Совет сессийĕ ячĕпе вахтăна тăчĕç. Вĕсем хăйсен цехне пысăк пахалăхлă продукци кăларакан цех туса хума тата ĕç тухăçлăхне нумай ÿстерме пулнă. Халĕ формовка тăвакан конвейерсенчен продукци январьтинчен ытларах илсе тăраççĕ. Продукци пĕтĕмпех пысăк пахалăхлă.

Трансформаторнăй завод цехĕсенче коммунизмăн аслă стройкисем валли хăватлă агрегатсем тăваççĕ. ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн сессийĕ ячĕпе тăрăшса ĕçлесе ку предприятири стахановецсем рекордсем турĕç. Хăвăрт ĕçлекен токарьсем Нефедовпа Горбунов юлташсем, слесарьсем Блиновпа Сергеев юлташсем кулленхи нормăна виçĕ хута яхăн ирттерсе тултараççĕ. Тимĕрçĕсен стахановла цехĕнче Королев юлташăн бригади паха тĕслĕх кăтартать. Нормăпа пăхнинчен виçĕ çурă хут ытларах детальсем туса, çак бригада пĕтĕм продукцин 98 процентне чи лайăх пахалăхпа кăларса тăрать.

Мускав деповĕнчи железнодорожниксем, Октябрьски чугун çулĕн Сталински мастерскойĕнче ĕçлекенсем сесси уçăлнă кун тĕлне локомотивсене социализмлă упраса тăма йышăнас ĕçе вĕçлеме пулнă. Вĕсем 19 паровуса социализмлă упраса тăма йышăннă та ĕнтĕ.

Петр Алексеев ячĕпе тăракан пир-авăр фабрикинчи арлакан цех коллективĕ, ĕç вахтине тăрса, кулленех планран ирттерсе темиçе çĕр килограмм çип арласа кăларать. (ТАСС).

Металлургсен çитĕнĕвĕ

МАГНИТОГОРСК. Сталин ячĕпе тăракан металлурги комбиначĕн коллективĕ СССР Верховнăй Совечĕн çитес сессийĕ ячĕпе ăмăртса ĕçлет.

Доменщиксем производствăра çĕнĕрен пысăк çитĕнÿсем тунă. Вĕсем уйăх пуçланнăран вара планран ирттерсе нумай чугун шăратса кăларнă. Орловпа Черкасов тата Душкин металлургсем ертсе пыракан виççĕмĕш домна кăмакин мастерсен бригади кăмакан усăллă калăпăшпе усă курас тĕлĕшпе рекорд тунă.

Хурçă шăратакансем хурçăна хăвăртрах шăратса кăлараççĕ. Февралĕн 22-мĕшĕнче виççĕмĕш мартен цехĕнче мĕнпур хурçăна хăвăрт шăратса кăларнă.

Февралĕн 25-мĕшĕнче 23-мĕш мартен кăмакин коллективĕ икĕ уйăхри задание цехра чи малтан тултарнă. Ку коллектив сухатусем тăвассине хирĕç кĕрешес тата султалăкри плана срокчен тултарассишĕн кĕрешес ĕçсене пуçарнă. Унта Панченко, Родичев тата Худяков юлташсем ĕçлеççĕ. Февральти продукцин 90 процентне хăвăрт меслетпе шăратса кăларнă. Производствăри операцисене хăрăс туса пырса, сталеварсем хурçă шăратас ĕçе планпа пăхнинчен нумай хăвăртлатнă.

Мартен кăмаки коллективĕ, хозрасчета куçса, февраль уйăхĕнче 50 пин тенкĕлĕх топливо перекетленĕ. (ТАСС).

Н. В. Гоголь вилнĕренпе 100 çул çитнĕ тĕле

Мускав облаçĕнчи ĕççыннисем мĕнпур çĕршывпа пĕрле Н. В. Гоголь вилнĕренпе 100 çул çитнине паллă тума хатĕрленеççĕ. Хуласенчи тата ялсенчи клубсенче, культура çуртĕсемпе творецĕсенче вырăссен аслă писательне асăнса литература каçĕсем, лекцисемпе калаçусем ирттереççĕ. Художествăллă пултарулăх кружокĕсем «Ревизор», «Авлану» спектакльсем тата «Вилĕ чунсем» поэмăпа Гоголĕн ытти произведенийĕсем тăрăх йĕркеленĕ инсценировкăсене лартса параççĕ. Библиотекăсенче писателĕн пурнăçĕпе творчестви çинчен калакан выставкăсем организацилеççĕ.

Коломнăри учительсен çуртĕнче «Н. В. Гоголĕн пурнăçĕпе творчестви» ятлă темăпа литературăпа художество каçĕ пулнă. Учительски институтри преподавательсемпе студентсем предприятисенче, учрежденисенче, çамрăк рабочисен общежитийĕсенче лекцисемпе докладсем туса параççĕ.

Люблинора рабочисен III-мĕш Интернационал ячĕпе тăракан клубĕнче Н. В. Гоголĕн пурнăçĕпе творчестви çинчен лекци хыççăн концерт пулнă, унта МХАТ тата Кĕçĕн театр артисчĕсем хутшăннă.

Куровски районĕнчи библиотекăра Гоголе асăнса ятарласа радиопередачăсем организациленĕ. Кунцева райсовет исполкомĕ Гоголь çырнă пьесăсем тăрăх чи лайăх спектакль лартса паракансен конкурсне ирттерме йышăннă. Конкурса 15 драма коллективĕ хутшăннă. (ТАСС).

Çĕнĕ заем облигацийĕсене алла параççĕ

Мускав хулинчи предприятисемпе учрежденисенче СССР халăх хуçалăхне аталантармалли Государство заемĕн (1951 çулхи кăларăмĕн) облигацийĕсене алла парас ĕç пуçланчĕ.

Рабочисемпе служащисем февралĕн иккĕмĕш çур уйăхĕшĕн ĕç укçи илнĕ чухне заем укçине пĕтĕмĕшпех тÿлесе татаççĕ. Колхозниксем те, заем укçине мартăн 1-мĕшĕ тĕлне тÿлесе татса, облигацисене алла илеççĕ.

СССР халăх хуçалăхне аталантармалли Государство заемĕн (1951 çулхи кăларăмĕн) кăçал икĕ тиражĕ пулса иртет.

(ТАСС).

Пĕрлешнĕ колхозсенчи çĕрйĕркелĕвĕ

СМОЛЕНСК, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Облаçри пĕрлешсе пысăкланнă 500 колхозра тĕрĕс пусă çаврăнăшĕсем тумалли ĕçсен проекчĕсене хатĕрлесе çитернĕ. Вĕсенчен чылайăшĕнче пусă çаврăнăшĕ валли çĕр касса панă ĕнтĕ. Облаçри ялхуçалăх артелĕсенчен виçĕ пайĕнчен пĕри çитес çуркунне тырăсене улшăнса тăракан таблицăсем тăрăх акса вырнаçтарма тытăнать.

Тырпул туса илмелли пусă çаврăнăшĕсемсĕр пуçне пур колхозсенче те фермăсем çумĕнчи çĕр участокĕсене, чылай колхозсенче улăхсемпе çарансем касса панă. Тырпул туса илмелли пусă çаврăнăшĕнче пуринче те тенĕ пекех нумай çул ÿсекен курăксем валли икĕ пусă уйăрса панă.

Кунпа пĕрлех тепĕр 700 колхозра хуçалăхри çĕрйĕркелĕвне туса ирттерме палăртнă.

Кĕрхи тырăсем тĕмĕлленме тытăннă

СТАЛИНАБАД, февралĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Агротехникăллă ĕçсене питĕ лайăх пурнăçласа пынипе тата çанталăк лайăх тăнипе Таджикистанра кĕрхи тырăсем хăвăрт аталанаççĕ. Дангарински, Кзыл-Мазарски, Пархарски тата ытти айлăм вырăнсенчи районсенчи колхозсенче те урпана тулă пĕлтĕрхинчен пĕр эрне маларах тĕмĕлленме тытăннă. Колхоз членĕсем кĕрхи тырăсене апат пама пуçланă.

Александр Матросовăн вилтăпри çинче

ВЕЛИКИЕ ЛУКИ, февралĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Хула варринче 1943 çулхи февральте паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ Совет Союзĕн Геройĕн Александр Матросовăн вилтăпри пур.

Паян геройăн вилтăпри патĕнче траурлă митинг пулнă. Унта Великие Луки хулинче пурăнакансем темиçе пин çын, комсомолпа пионер организацийĕсен тата шкулсен делегацийĕсем, çавăн пекех Александр Матросов службăра пулнă гвардейски стрелковăй полкăн представителĕсем пухăннă. Вилтăпри çине чечек кăшăлĕсем нумай хунă.

Йĕпреç вăрманпромхозĕнче шоферсем хушшинче автомашинăсемпе туллин усă курассишĕн социализмлă ăмăрту анлă сарăлнă.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: социализмлă ăмăртăва пуçаракансем (сулахайран сылтăмалла) А. Ф. Солдатова, В. Е. Воронин тата Ф. В. Барышев юлташсем.

Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕ.

АВТОМАШИНĂСЕМПЕ ТУЛЛИН УСĂ КУРМАЛЛИ МАЙСЕМ ÇИНЧЕН

А. СОЛДАТОВА
В. ВОРОНИН
Ф. БАРЫШЕВ

Йывăç турттарнă çĕрте автомашинăсемпе туллин усă курасси шоферсен ăсталăхĕнчен тата ĕçе тĕрĕс организациленинчен килет. Çавна шута илсе, Йĕпреç вăрманпромхозĕнчи шоферсем ĕçе хăвăртлатма пулăшакан майсем палăртрĕç, машинăсемпе лайăхрах усă курма социализмлă обязательство йышăнчĕç. Çакăн хыççăн пирĕн ĕç нумай хăвăртланчĕ. Халĕ шоферсем 400 фестметр вырăнне кулленех 600 кубометр йывăç турттарса кăлараççĕ. **Пирĕн хушăмăрта нормăна тултарайман шоферсем çук. Нумайăшĕ кĕркуннепе хĕллехи сезонти задание февралĕн 10-мĕшĕ тĕлне тултарчĕç.**

Малта пыракан шоферсен паха опытне пĕтĕçтерсе ыттисен хушшинче сарни, машинăна лайăх пăхса усрама вĕрентни коллектив хастарлăхне ÿстерет. Акă, пирĕн хушăмăрти Анна Солдатовăна илер. Вăл сăрталла улăхмалла вырăн пулсан тата çанталăк ăшăтнă йĕпе-сапаллă ... е çемçе юр çунă вăхăтра автомашина çине ытларах тиет, ун хыçĕнчен кăкаракан çуна çине сахалтарах хурать. Кун пек тусан автомашина кустăрмисем вырăнта çаврăнса тăмаççĕ. Çанталăк лайăх тăрсан, çул сăрт-туллă мар пулсан, автомашина хыçĕнчен кăкаракан çуна çине ытларах, 8—10 кубометр таран тиеттерет.

Валентин Воронин автомашинăна лайăх пăхса усрать. Хăйĕнпе ылмашса ĕçлекен шоферпа пĕр-пĕрне автомашинăн кăлтăкĕ çинчен пĕлтерсе тăраççĕ тата ăна çийĕнчех юсаççĕ. Грузчиксем тиенĕ вăхăтра вăл çунан икĕ енне лартмалли юпасене (стойкăсене) хатĕрлесе парса, ĕçе хăвăртлатма пулăшать. Яланах хыçалтан çуна кăкарса турттарать. Çул çинче автомашинăна парса ун çине тиенĕ йывăç мĕнле пынине тĕрĕслесе тăрать. Çавăнпа вăл складран тиесе тухнă пĕр çуркама та вăрмана пăрахса хăвармасть.

Федор Барышев, çанталăк сивĕ тăнă вăхăтра çул йывăррине шута илсе, машина çине сахалтарах тиесе турттарать. Ăшă чух ытларах хурать. Автомашинăна хăйĕнпе улшăнса ĕçлекен шофера вăхăтра парса, ăна та нормăна тултарма пулăшать.

Çаксем пурте, ĕçе хăвăртлатма пулăшнипе пĕрлех, автомашинăн ĕмĕрне вăрăмлатаççĕ. Кашни сезонта хăйне майлă ĕçлеме тивет. Çавăнпа ĕнтĕ малта пыракансен ĕç меслечĕсене хĕлле те, çулла та тĕпчесе пĕлсе сарма тăрăшмалла.

Автомашинăпа турттарассине аванлатас тĕлĕшпе вăрманпромхоз дирекцийĕ чылай ĕç туса ирттернĕ. Чи малтанах дежурнăй машинăсем уйăрнине палăртмалла. Вĕсемпе шоферсем йывăр тиенĕ автомашинăсене сăрталла улăхма пулăшаççĕ.

Иртнĕ сезонсенче грузчиксем хăйсен сменинчи автомашинăсем çине кăна тиенĕ. Склада тепĕр сменăри машина пырас пулсан, ун çине тиемен. Çавна пула тепĕр чухне автомашинăсем 2—3 сехет смена улшăнасса кĕтсе ларатчĕç. Хальхи сезонта ку çитменлĕхе пĕтернĕ. Грузчиксем, склада автомашина пырсан, вăл хăш сменăрине тишкĕрсе тăмаççĕ. **Тиес ĕçри йĕркесĕрлĕхе пĕтерни пире ĕç тухăçлăхне 25 процент ÿстерме пулăшрĕ. Чугун çул хĕрринчи складри грузчиксен бригадине çирĕплетни автомашинăсене пушатасса кĕтсе черетре тăрассине пĕтерме пулăшрĕ.**

Вăрманти çул хĕрринчи складра, тиеме йывăç пулман пирки пĕр вырăнтан тепĕр вырăна чуптарса çÿресе те вăхăта пайтах сая янă, бензина вырăнсăр сунтарса пĕтернĕ. **Ку сезонта кашни делянкăра тенĕ пекех склад тунă. Склад патне автомашинăна нĕме çул хывнă.** Склада делянкăрах тунин усси пысăк. Пĕр енчен йывăçсене пĕр çĕре пуçтарса купалама сывăх пирки ĕç хăвăрт пулать. Кăснă йывăçсем юр айне юлмаççĕ. Вĕсене лав çине тиесе турттарма çăмăл. Тепĕр енчен—çул хĕрринчи склада турттарса тăкас кăларман пирки вăрман халалессин хăйне ларакан хакне чылай йÿнетме май парать. Çул хĕррине кăларакан лавсем йывăçа тÿрех чугун çул хĕрринчи склада турттарма пултараççĕ. Автомашинăсемпе турттарма йывăç хуть хăçан та çителĕклĕ.

Иртнĕ кунсенче вăрманпромхоз 2 автоэлектрокран туянчĕ. Вĕсене туяниччен юман йĕрешсене автомашина çине тиенĕ чух вăхăт нумай иртетчĕ. Халĕ ун пек йывăр япаласене вутăран та хăвăртрах тиеме пулать. Чугун çул хĕрринчи складра автомашинăсене пушатасси те хăвăртланчĕ тата йывăçсене штабеле сортимент тăрăх уйăрса купаласси аванланчĕ.

Мастерскойри ĕçе лайăхрах йĕркелени автомашинăсемпе туллинрех усă курма май пачĕ. Çуркуннехипе çуллахи сезонта мастерскойра пĕр смена кăна ĕçлетчĕ. Çавна пула автомашинăн кăшт пăсăлсанах та чарса лартма тиветчĕ. Халĕ мастерскойра çĕрле те дежурнăй слесарьсемпе токарьсем пур. Вĕсем хуть хăçан та машинăна юсаса хума ярса параççĕ.

Ĕлĕк çунтармаллипе сĕрмелли япаласене смена улшăннă вăхăтра панă. Вăрмана ытларах хутлакан шоферăн, паллах, çунтармалли япала та нумайрах пĕтет. Çавна пула малта пыракан шоферсем ĕç тухăçлăхне вăрмана ытларах хутласа мар, нумайрах тиесе турттарнипе кăна ÿстерсе пыма пултарнă. Çунтармаллипе сĕрмелли япаласене талăкĕпех пĕр чарăнмасăр парса тăмалла тунă хыççăн ĕç пĕтĕмпех улшăнчĕ. Шоферсем нумайтарах тиесе турттарнипе пĕрлех, ытларах хутлама та пултараççĕ. Газогенераторнăй автомашинăсемпе ĕçлесси те аванланчĕ. Вĕсене çул çине кайнă чух запас чурка парса яраççĕ. Кунсăр пуçне Дубравнăйри вăрман пунктĕнче ятарласа чурка парса тăракан пункт уçнă. Кирлĕ пулсан, шоферсем унтан талăкĕпех чурка илме пултараççĕ.

Ăмăртăва тĕрĕс организациленин пире нихçанхинчен ытларах хавхаланса ĕçлеме пулăшрĕ. Пирĕн вăрманпромхозра сменăпа смена, машинăпа машина тата автомашинăна çинче улшăнса ĕçлекен шоферсем пĕрпĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Сменăпа смена хушшинчи ăмăрту мĕнле пынине кашни вунникĕ сехетрен кăтарту хăми çине çырса пĕлтерсе тăраççĕ. Пĕр автомашинăпа ĕçлекен шоферсем вара хăйсем мĕн чухлĕ турттарнине смена улшăннă чухнех пĕрпĕрне пĕлтереççĕ. Ăмăртура никамăн та кая юлас килмест. Çавăнпа шоферсем пĕринчен тепĕри ытларах турттарма тăрăшса, ĕç тухăçлăхне ÿстерсе пыраççĕ.

Пирĕн вăрманпромхозра автомашинăсемпе туллин усă курас тĕлĕшпе ытти ĕçсем те туса ирттернĕ. Вăл ĕçсене пурне те кунта кăтартса пĕтерме çук. Вĕсем пурте пире хăвăрт ĕçлеме май параççĕ. **Март уйăхĕнче эпир автомашинăпа кашни кун 400 кубометр вырăнне 800 кубометр таран турттарса кăларма ĕмĕтленсе ĕçлетпĕр.**

Кĕркуннепе хĕллехи вăрман хатĕрлемелли сезон пуçланнă вăхăтра эпир автомашинăпа йывăç турттармалли плана мартăн 15-мĕшĕ тĕлне тултарма сăмах панăччĕ. Автомашинăсемпе туллин усă курассишĕн кĕрешÿ пуçласа янă хыççăн эпир хамăр сăмаха маларах пурнăçлама пултарни курăнчĕ. Эпир сезон планне мартăн 10-мĕшчен тултаратпăр, тесе калама пултаратпăр.

Колхоз председателĕсен республикăри канашлăвĕ

* * * *

Колхоз стройĕн аслă вăйĕ

М. ДОЛГОВ,
Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхоз председателĕ

Партипе Совет правительстви тата Сталин юлташ куллен пулăшнипе, пирĕн çĕршыври колхоз хресченĕсем тырпул тухăçлăхне ÿстерес, обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе çултан-çул пысăк çĕнтерÿсем тăваççĕ. Çакăн çинчен пирĕн ялхуçалăх артелĕн ситĕнĕвĕсем те лайăх кăтартса параççĕ.

«Гвардеец» колхоз обществăллă хуçалăха пур енĕпе те аталантарса пырать. Пирĕн уй-хирсенчи тырпул тухăçлăхĕ тата обществăллă выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ нумай ÿснипе колхозăн таварлă продукцийĕ ÿссе пырать, артелĕн уйрăлми фончĕ пысăкланать, колхозниксен пурнăçĕ лайăхланать.

Пирĕн колхозăн ситĕнĕвĕсем тырпул тухăçлăхĕпе выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ мĕнле ÿссе пынине танлаштарса пăхнинчен лайăх курăнать. 1940 çулта вăтам шутпа кашни гектартан тĕштырăсем 10,9-шер центнер, 1949 çулта—15,14-шер центнер, 1950 çулта—16,82-шер центнер, иртнĕ 1951 çулта—18,79-шер центнер тухнă.

1951 çулта колхоз организациленнĕренпе пĕрремĕш хут выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстермелли плана та пĕтĕмĕшпех тултарнă. Вăтам шутпа эпир кашни сăвакан ĕнерен 1.647 литр сĕт суса илнĕ, кашни сурăхран 3,2 килограмм çăм касса илнĕ, 100 сурăхран 125 путек, кашни сысна аминчен 14,8 çура илнĕ. 1950 çулхипе танлаштарсан, 1951 çулта виçĕ хут нумайрах аш-какай туса илнĕ.

Таварлă продукци ытти енĕпе те ÿсет. Тĕштырăсем енĕпе иртнĕ çулта вăл 27 процент, сĕт енĕпе—58 процент, аш-какай енĕпе—88 процент пулнă. Çакна май колхозăн укçа-тенкĕ тупăшĕ ÿснĕçемĕн ÿсет. 1940 çулта вăл 123 пин тенкĕ пулнă, 1949 çулта—511 пин тенкĕ, 1950 çулта—713 пин тенкĕ, 1951 çулта—844,5 пин тенкĕ пулнă.

Малтанхи çулсенче эпир, тĕпрен илсен, тырпул сутнипе кăна укçа-тенкĕ илнĕ. Иртнĕ çулта вара техникăллă культурăсем сутса тунă тупăш мĕнпур укçа-тенкĕ тупăшĕнчен 34,9 процент шутланать, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем сутнинчен илнĕ тупăш—15,5 процент, сад-пахча продукчĕсене сутнинчен илнĕ тупăш — 12,5 процент шутланать.

Колхозăн уйрăлми фончĕ 1940 çулта 278 пин тенкĕ пулнă пулсан, вăл 1951 çулта 1.206.000 тенкĕ пулнă.

Колхоз производствинче пысăк ситĕнÿсем тунипе пĕрлех ситменлĕхсем те пур-ха. Обществăллă выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе ку таранччен тунă результатсем пире çырлахтармаççĕ.

Пирĕн колхоз фермисенче ĕçлекенсем 1952 çулта кашни ĕнерен 2.000 литр сĕт суса илме, кашни сурăхран 3,5 килограмм çăм касса илме, кашни сысна аминчен 16 çура илме пулчĕç.

Ялхуçалăх артелĕн членĕсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлă сарса пырса, эпир колхоз производствин пур участокĕсенче те çĕнĕ ситĕнÿсем тăвăпăр.

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансенчен вĕренмелле

А. МОИСЕЕВ,
Муркаш районĕнчи «Красное Сормово» колхоз председателĕ

Пирĕн социализмлă ялхуçалăхĕ вăйлăн малалла аталанса пырать. Колхоз производствинче çĕнĕлле ĕçлекенсем совет агробиологи наукин ситĕнĕвĕсемпе, колхоз производствинче малта пыракансен опычĕпе усă курса, колхозсен уй-хирĕсенче вăйлă тырпул туса илеççĕ, обществăллă выльăх-чĕрлĕх шутне ÿстереççĕ.

Пирĕн республикăра çултан-çул пысăк тухăçлă ялхуçалăх культурисем туса илекен колхозсем сахал мар. Вĕсен шутне Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан, Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан, Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» тата ытти нумай колхозсем кĕреççĕ.

Анчах та кая юлакан колхозсем те пур-ха. Çакă вăл вĕсен çутçанталăк условийĕсем е çĕрсем, малта пыракан колхозсемпе танлаштарсан, япăхрах пулнинчен мар, тăпран сухаламалли сийне 20—25 сантиметр тарăнăшĕ те пулин сухалама хăранинчен килет. Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозри пек 30—35 сантиметр тарăнлатасси çинчен вĕсем каласмаççĕ те. Тăпран сухаламалли сийне тарăнлатма хăрани уя вырăнти тата минераллă удобренисем çителĕклĕ кăларманнинчен килет. Хăшпĕр колхозсенче кĕлпе кайăк-кĕшĕк тислĕкне пухмаççĕ, пухаççĕ пулсан та уя кăлармаççĕ, ятне çеç тăваççĕ. Çакăн пек колхозсем пирĕн Муркаш районĕнче те пур. Сăмахран, Мичурин ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Смирнов юлташ), «Труд» (председателĕ Семенов юлташ) тата ытти хăшпĕр колхозсем çавсен шутне кĕреççĕ.

Пирĕн малашне пĕр-пĕрин опычĕсемпе лайăхрах паллашмалла, ĕçе малта пыракан колхозсенчи пек йĕркелемелле.

Пирĕн колхоз малтанах 1950 çулта 5 колхозран пĕрлешсе пулнăччĕ. Иккĕмĕш хут 1951 çулхи мартра пысăкланчĕ. Халĕ «Красное Сормово» колхоз малтанхи 7 пĕчĕк колхоза, 10 яла пĕрлештерет. Колхозăн çĕрĕ виçĕ пин гектартан иртет. Пĕрлешиччен вак колхозсенчен чылайăшĕ вăтам шутпа кашни гектартан 6—8 центнер тырпул туса илнĕ. Вĕсем час-часах государствăна ялхуçалăх продукчĕсем парас тĕлĕшпе парăмлă юлнă. 1951 çулта эпир пысăк тухăçлă тырпул туса илме пултараймарăмăр-ха, мĕншĕн тесен 1951 çулхи çуркунне çеç колхозсем пĕрлешрĕччĕ. Анчах та иртнĕ çулхи хăшпĕр бригадăсен опычĕ çакна кăтартса парать: пысăк хуçалăхсенче ĕçе лайăхлатма пысăк майсем пур, ĕçе тĕрĕс организацилесен тата агротехникăна тĕрĕс пурнăçласан кирек епле çанталăкра та вăйлă тырпул туса илме пулать. Сăмахран, пирĕн колхозра 1-мĕш бригада пĕлтĕр 14 гектар çĕр лаптăкĕ çинче вăтам шутпа гектартан 26,7 центнер çурхи тулă туса илчĕ. Çак участок çине бригада 2.057 лав торф, 1.700 лав тислĕк, 72 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тата 60 центнер тĕрлĕ йышши минераллă удобренисем кăларнă. Кĕрхи çĕртмене 20—22 сантиметр тарăнăш сухалани. Акасса хĕрессĕ майпа, вăрлăхпа пĕрле пĕрчĕллĕ суперфосфат хутăштарса акнă, кашни гектар çине 2,4 центнер вăрлăх кĕртнĕ. Калчана аммони сульфачĕ сапса апат пана та сĕреленĕ. Çакна пула бригада лайăх ситĕнÿсем турĕ.

Пирĕн колхоз членĕсем, 1-мĕш бригадăн опычĕпе шута илсе, кăçал вăтам шутпа кашни гектартан 20 центнертан кая мар сурхи тулă, гектартан 16—17-шер центнер кая мар тĕштырă, çĕрулми 1.200-шер пăт туса илме задача лартрĕç. Çак задачăна пурнăçлас тесе, пирĕн бригадăсем суракине большевикла хатĕрленме тытăнчĕç. Февралĕн 15-мĕшĕ тĕлне уя 18.226 лав тислĕк, 20.005 лав торф тата юшкăн кăларнă. Вăрлăх удобренисем хатĕрлемелли плана 8.000 лав ытла ирттерсе тултарнă. 460 центнер кĕл, 405 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Минераллă удобренисем 147 тонна кÿрсе килнĕ. Колхозăн вăрлăх çителĕклĕ.

Пирĕн пĕрлешсе пысăкланнă колхоза ялхуçалăх специалисчĕсем питех те кирлĕ, анчах та çак ĕçре республикăри Ялхуçалăх министерстви пире пулăшу панине курмастпăр-ха. Эпĕ Ялхуçалăх министерстви пирĕн колхозран ялхуçалăх институтĕнче вĕренекен Калинин студента, вăл вĕренсе тухнă хыççăн, хамăр колхоза яма ыйтнăччĕ. Анчах та пирĕн пата агроном ямарĕç. Эпĕ Ялхуçалăх министерствин пирĕн обкомĕ пирĕн ыйтăва тивĕçлипе татса парасса шанатăп.

Обществăллă продуктивлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1952 çулхи плана пирĕн колхоз ĕне выльăх енĕпе 135 процент, сурăхсем енĕпе—127 процент, сыснасем енĕпе—92 процент, кайăк-кĕшĕк енĕпе—132 процент, лашасем енĕпе 100 процент тултарнă. Анчах та эпир выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе чылай юлса пыратпăр-ха. Çапах та пирĕн ферма работникĕсем çак задачăна çывăх вăхăтра йăнăçлă татса парĕç. Çакна валли колхозра пур майсем те пур. Выльăх-чĕрлĕх валли апат тата витесем çителĕклĕ. Выльăх апачĕ хатĕрлеме тымарсмĕсем тетметелли, жмыхдробилка тата ытти механизмсем пур. Фермăсене водопровод кĕртнĕ, автопоилкăсем лартнă, выльăх апатне витесене илсе пыма рельсăсем хурса çитнĕ. Тулă Вăсал сурбунне сурăх çăмне электричество вăйĕпе ĕçлекен машинăсемпе касма тытăнатпăр.

Фермăра ĕçлекенсен ĕçне тĕрĕс организацилесе, фермăри ĕçсене механизацилесе тата выльăх апачĕн çирĕп никĕсне туса, эпир хамăр умма выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе лартнă задачăсене йăнăçлă пурнăçлама пултаратпăр, çавăн пек тума тивĕçлĕ те.

Партипе правительство тата Сталин юлташ пирĕн республикăри колхозсене тĕреклетессишĕн тăрăшнине çине ответлесе, эпир çултан-çул яланах вăйлă тырпул ÿстерессишĕн, обществăллă выльăх-чĕрлĕх шучĕпе унăн тухăçлăхне ÿстерессишĕн пĕтĕм вăя хура ĕçлĕпĕр.

Артель хуçалăхĕ тĕреклĕнет

П. ГРИГОРЬЕВ,
Шупашкар районĕнчи «Красный флот» колхоз председателĕ

Пирĕн колхоз юлашки çулсенче тырпул тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе сахал мар ĕçсем турĕ. Эпир çакна агротехникăна тĕрĕс пурнăçланипе; вăрăнти удобренисем уя нумай кăларнипе, минераллă удобренисем нумайрах кÿрсе килсе уя кăларнипе тума пултартăмăр. Хĕллехи вăхăтра эпир юр тытса хăвараттăмăр, сурхи пуçне кăлчасене апат паратпăр, тăпрана сухаласа çемçетес ĕçе тĕрĕс туса пыма тăрăшатпăр, пахаа вăрлăх акатпăр. 1951 çулта эпир кашни гектартан 20-шер центнер тĕштырă туса илтĕмĕр.

Пирĕн колхоз обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана та тытăнса тултарчĕ. Эпир выльăх-чĕрлĕх шучĕне срокчен 1953 çул вĕçĕнчи тĕле пулмалли минимума ситерĕмĕр, пирĕн колхозниксем виççĕмĕш çул ĕнтĕ государства аш-какай, сĕт тата çăм парас тĕлĕшпе 10 процент чухлĕ çăмăллăхпа усă кураççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе тунă пирĕн ĕçе пысăка хурса хакларĕç. СССР Ялхуçалăх министерстви пирĕн колхоза икĕ хутчен—автомашина тата мотоцикл парса премирленĕ.

Выльăх-чĕрлĕх шучĕ ÿсиипе пĕрлех унăн тухăçлăхĕ те татти-сыпписĕр ÿсет. 1951 çулта пирĕн дояркăсем кашни ĕнерен 1.657-шер литр сĕт суса илнĕ. Кашни сысна аминчен 20-шер çура илнĕ. Государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли плана пирĕн колхоз çуллен срокчен тултарса пырать.

Халĕхи вăхăтра пирĕн колхозниксем суракине хатĕрленес тĕлĕшпе тимлĕ ĕçлеççĕ. Эпир фермăсене витесенчен вăрăнти удобренисем уя кăларнине кăна хăпланатпăр. Эпир çуркунне Шупашкар хулинчен сĕршер лав тислĕк турттаратпăр.

Вăрлăхсене сортласа тасатнă, мĕнле шăтнине тĕрĕсленĕ, ялхуçалăх машинисене юсаса çитернĕ.

Пирĕн колхозниксем ĕçленĕшĕн тырпул нумай илессĕ, ĕçсен пурнăçĕ çултан-çул лайăхланса пырать. Иртнĕ çулта эпир кашни ĕçкунĕ пуçне 4-шар килограмм тĕштырă, 2-шер килограмм çĕрулми тата 3-шер тенкĕ укçа валеçсе патăмăр.

Халĕ колхозниксем 1952 çулта тата пысăкрах тухăçлă тырпул ÿстерме тăрăшса хатĕрленеççĕ. Григорьев юлташ ертсе пыракан чи лайăх уй-хир бригади кашни гектартан 150-шар пăт тырă, 180-шар пăт кĕрхи тулă тата 1.300-шер пăт çĕрулми туса илме пулчĕ. Фермăсенче ĕçлекенсем кашни ĕнерен 1.800-шер литр сĕт суса илме, кашни сурăхран 3-шер килограмм çăм касса илме, кашни чăхран 100-шер çăмарта илме сăмах пачĕç.

Эпĕ колхозниксене тырпул тухăçлăхне, выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе мĕнпур майсене мобилизацилеме, çапла вара Сталин юлташ патне янă çырура илнĕ обязательствăсене чыслă пурнăçлама, Мари тата Мордва республикисенчи ялхуçалăх ĕçченĕсемпе пыракан социализмлă ăмăртура малта тухассишĕн кĕрешме чĕнетĕп.

Совет Правительстви Итали Правительствине панă нота

Февралĕн 8-мĕшĕнче Итали Ют çĕршывсен ĕçĕсен министрĕн заместителĕ Тавиани господин ССР Союзĕн Италири Посолне М. А. Костылева Итали Правительствин Италие Пĕрлешнĕ Нацисен Организацине илес ыйтупа çырнă нотине панă.

Февралĕн 24-мĕшĕнче ССР Союзĕн Италири Посольстви Итали Правительствине Совет Правительстви ответлесе çырнă çакăн пек нота ярса панă:

«Итали Правительстви кăçалхи февралĕн 8-мĕшĕнче Италие Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн членне илес ыйтупа нота çырса янă май Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Посольстви çапла калать:

Итали Правительстви хăйĕн нотинче Италие Пĕрлешнĕ Нацисен Организацине илес ĕçре Совет Союзĕ чăрмантарнă пек, çапла вара Италипе тунă мирлĕ Договор тăрăх хăй çине илнĕ обязательствăсене пăснă пек кăтартма хăтланать. Çавăн пек калани чăнлăха хирĕç пырать тата пурте пĕлекен фактсене юриех пăсса кăтартни пулать.

Совет Союзĕ, пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ, Италие законлă право пур ытти государствăсемпе пĕрле, çав шутра вăрçă вăхăтĕнче Италипе пĕр пек лару-тăрура пулнă государствăсемпе пĕрле, Пĕрлешнĕ Нацисен Организацине илме темиçе хутчен те сĕнчĕ. Çав государствăсем тĕлĕшпе Совет Союзĕ, шăпах та 1947 çулхи февралĕн 10-мĕшĕнче Парижра Мирлĕ Договорсем çине алă пуснă ытти çĕршывсем пекех, вĕсем Пĕрлешнĕ Нацисен Организацине илме ыйтнине хÿтĕлеме сăмах парса обязательство илнĕ.

ООН Генеральнăй Ассамблейин кăçалхи февраль уйăхĕнче хупăннă улттăмĕш сессийĕнче Совет Союзĕ Италие тата ытти вунвиçĕ çĕршыва Пĕрлешнĕ Нацисен Организацине илмелле тесе çĕнĕрен сĕнÿ панă. Генеральнăй Ассамблейăн Политика Комитечĕ январĕн 25-мĕшĕнче делегацисен ытларахăшĕ сасăланипе ССР Союзĕн çак сĕнĕвне йышăннă, ку сĕнĕве хирĕç США делегацийĕ кăна сасăланă, ку ыйту тăрăх Великобританипе Франци нихăш майлă та сасăламан. США ытти çĕршывсен делегацийĕсене сĕмсĕррĕн хĕснипе пула кăна ССР Союзĕн çав сĕнĕвне, Политика Комитечĕ ырланăскере, Генеральнăй Ассамблейăн пленумĕнче йышăнман. ССР Союзĕн сĕнĕвне февралĕн 6-мĕшĕнче Хăрушсăрлăх Советĕнче пăхса тухнă чухне те США делегацийĕ тепĕр хут çав сĕнĕве йышăнассине хирĕç сасăланă, çавăн чухне те Великобританипе Франци нихăш майлă та сасăламан, çапла вĕсем Италие тата ытти вунвиçĕ государствăна Пĕрлешнĕ Нацисен Организацине илме чăрмантарнă.

Çакăнта асăннă фактсене, паллах ĕнтĕ, Итали Правительстви пĕлет, анчах вăл кун пирки хăйĕн нотинче нимĕн те шарламасть. Асăннă фактсенчен тата çакă курăнать: Италие халиччен Пĕрлешнĕ Нацисен Организацине илмен пулсан, куншăн США, Великобритани тата Франци Правительствисем айăплă, вĕсен Италие Пĕрлешнĕ Нацисен Организацине илес ыйтури позицийĕ государствăсем пĕр тан праваллă пулмалли принципа хирĕç пырать, мĕншĕн тесен США, Великобритани тата Франци Правительствисем ООН членĕ пулма, Италипе пĕр пек праваллă государствăсене Пĕрлешнĕ Нацисен Организацине илме чараççĕ.

Çапла вара, Итали Правительстви хăйĕн заявленийĕнче Италие Пĕрлешнĕ Нацисен Организацине илме Совет Союзĕ чăрмантарса тăнă пек кăтартма хăтланни вăл Совет Союзĕн ку ыйтури чăн-чăн позицийĕ тĕлĕшпе Италири общественноçа улталама тăрăшни пулать тата Итали Правительстви США, Великобритани тата Франци Правительствисене — Италие тата ытти çĕршывсене Пĕрлешнĕ Нацисен Организацине илес решени йышăнма чăрмантарса пыракан Правительствăсене хÿтĕлеме тăрăшнине кăтартса парать.

Çаксене шута илсе, Совет Правительстви Итали Правительствин нотинче протестлесе çырнине пачах тĕрĕс мар тесе шутласа сирсе ярать.

Февралĕн 8-мĕшĕнче панă нотăра Итали правительстви «хăй договорта Итали çине СССР тĕлĕшпе хунă обязательствăсене малашне кирек мĕнле ĕç тунă чухне те Совет Правительстви Италие Пĕрлешнĕ Нацисен Организацине илес ыйтура тытса пынă позици пирки пулса тăнă лару-тăрупа çыхăнтарса пурнăçласа пырĕ», тесе калать. Совет Союзĕ тĕлĕшпе ответлăха туймасăр çавăн пек заявлени тунине Итали правительстви Мирлĕ Договора пурнăçласа пыма пăрахма шутлани пулса тăрать тесе хакламалла, ăна урăхла хак пама çук.

Итали Правительстви çав договорти пысăк пĕлтерĕшлĕ постановленисенчен чылайăшне пăснăшăн ответ тытма тивĕçлĕ. Çакна Совет Правительстви 1949 çулхи июлĕн 19-мĕшĕпе сентябрĕн 20-мĕшĕнче тата 1952 çулхи январĕн 25-мĕшĕнче ярса панă нотăсенче кăтартса паннăччĕ. Анчах, февралĕн 8-мĕшĕнчи нотăри çÿлте асăннă заявление тăвиччен, Итали Правительстви Мирлĕ Договора пурнăçласа пыма пăрахма шутлани çинчен çавăн пек уççăнах каласа памаччĕ. Итали Правительстви çÿлте асăннă заявление туса, хăй Мирлĕ Договора пăсса пырасси çинчен, çавăн пек ĕçсене уççăнах туса пырасси çинчен ятарласах пĕлтерет пулас.

Итали Правительстви пĕррремĕш çул кăна мар ĕнтĕ Мирлĕ Договорта çар ĕçĕ енĕпе йышăннă постановленисене пăсас çулпа, Итали территорине Америкăн Европăри агрессиллĕ ĕçĕсен плацдармĕ туса хурас çулпа пырать.

Итали Правительстви çĕршыв территоринче ытти агрессиллĕ государствăсен нумай çар базисене тума ирĕк панă кăна мар, вăл тата агрессиллĕ Çурçĕр Атлантика блокне те кĕчĕ, çакă вара Мирлĕ Договора тÿрремĕнех пăсни пулать.

Итали Правительстви Мирлĕ Договор тăрăх Совет Союзне репараци тÿлес пирки хăй çине илнĕ обязательствăсене пачах пурнăçламарĕ кăна мар, вăл тата хăйĕн февралĕн 8-мĕшĕнчи нотинче Мирлĕ Договорта ССР Союзĕ тĕлĕшпе мĕн каланине пурнăçламашкăн ответ тытассине те хăйĕн çинчен сирсе яма хăтланать.

Çак фактсенчен, çавăн пекех ытти чылай фактсенчен, Итали Правительстви Мирлĕ Договорта сырса хунă хăйĕн обязательствисене пурнăçлама пăрахас çул çине тăни, законсăр ĕçсем тăвас çул çине тăни курăнать, çапла вара тĕнчери çĕршывсем пĕр-пĕрин хушшинче йышăнакан обязательствăсем çине Итали Правительстви алă пуснипе шанăçсăрлăха кăларать.

Уççăнах çакă курăнса тăрать: Итали Правительстви Çурçĕр Атлантика блокĕн организаторĕсемпе — США, Великобритани тата Франци Правительствисемпе пĕр каварта тăман пулсан, хăйĕн политикине çав блокăн агрессиллĕ планĕсене пурнăçлас ĕçе пăхăнтарман пулсан, вăл çавăн пек тăвас çукчĕ. Анчах ку сăлтав Итали Правительствин ответлăхне пĕчĕклетмест, законсăр ĕçсем тунăшăн унăн ответ тытмалла пулать.

Çÿлте каласа панисене шута илсе, Совет Правительстви Итали Правительствин нотине тĕнчери çĕршывсем пĕр-пĕринпе çыхăнса тăрас тĕлĕшпе йышăннă йĕркесене пăсни тесе шутласа сирсе ярать, Итали Правительстви хăй Мирлĕ Договора пăснă пирки тухса тăракан пур ĕçсемшĕн те ответ тытассинчен пăрăнма пултараймасть, тесе калать».

ЮЛАШКИ ПОЧТĂРАН

Политикăллă тимсĕрлĕх

Çак иртнĕ кунсенче пирĕн çĕршыври ĕççыннисем Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 34 çул тултарнине паллă турĕç. Фабрикăсемпе заводсенче, колхозсемпе учрежденисенче, шкулсенче Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕн историллĕ çĕнтерĕвĕсем çинчен каласусемпе лекцисем тата докладсем нумай ирттерчĕç, ĕççыннисен савăнăçлă пухăвĕсем пулчĕç. Хаçатсен уяв ячĕпе тухнă номерĕсенче совет воинĕсен çĕнтерĕвĕсем çинчен, мирлĕ пурнăçа çирĕплетессишĕн пирĕн ĕççыннисем тăрăшса ĕçлени çинчен çырнă статьясем, салтаксемпе сержантсен тата офицерсен çырăвĕсем пичетленсе тухрĕç.

Шăхасан районĕнчи «Вăйлă тырпулшăн» хаçат Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ çинчен февралĕн 22-мĕшĕнче пичетленсе тухнă номерте мĕн пурĕ те çапла кăна çырчĕ:

«Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕн кунĕ ячĕпе районта çамрăксен йĕлтĕрпе эстафети иртет. Йĕлтĕрçĕсем хамăр районти колхозсенче тата Красноармейски районĕнче пулчĕç. Вĕсем шкулсемпе колхоз çамрăкĕсем хушшинче йĕлтĕр спортне сарас тĕлĕшпе тата Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ çинчен каласусемпе докладсем ирттернĕ».

Хаçатра çакăнсăр пуçне Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕн уявĕ çинчен пĕр сăмах та асăнман. Хаçатăн ыран уяв тенĕ чухне тухнă номерĕ ытти кунсенче пичетленсе тухнă номерсенчен нимĕнпе те уйрăлса тămасть.

Историллĕ паллă куна «асăрхамасăр» ирттерсе янă вăл редакци работникĕсен (редакторĕ В. Иванов юлташ) политикăллă тавракурăм çителĕксĕррине, вĕсем тимсĕр пулнине, редакци плансăр, малашнехине курса тăмасăр ĕçленине пĕлтерет.

Пĕр пайлă пьесăсем

Чăваш АССР халăх творчестви çурчĕпе государство издательстви ятти драмкружоксем валли çак кунсенче пьесăсен кĕнеки кăларчĕ.

Кĕнекере пурĕ çичĕ пьеса. Кунта К. Ивановăн «Ала тавраш...», Н. Терентьевăн «Сирен аллейи», Г. Пласкинăн «Ывăлĕ патĕнче», С. Павловăн «Шурă кăвакарчăн» пьесисем пичетленнĕ. Вырăсларан куçарнă пьесăсенчен çаксем кĕнĕ: А. Школьник—«Тăван сынсем», А. Ольшанский—«Сута сул» (иккĕшне те С. Павлов куçарнă), К. Финн—«Парне» (А. Артемьев куçарнă).

Кĕнекере 96 стр., хакĕ 1 тенк. 60 пус, тиражĕ 3.000 экз. Ăна Чăвашкниготоргăн, Чăвашпотребсоюзăн тата «Союзпечатĕн» лавккисемпе киоскăсенче туянма пулать. Çырăнса илес текен Чăвашкниготоргăн «Книга-почтой» пайне кĕнеке хакĕ тăнă чухлĕ укçа ярса памалла.

Отрядсенчи пионерсен сборĕсем çинчен

Пионерсен сборĕ шкул ачисене коммунизмла воспитани парас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăрать. Сбор — пионерсен коллективлă ĕçĕн тĕп формисенчен пĕри.

Пионерсем хăйсен сборне вĕренÿ е дисциплина ыйтăвĕсене сÿтсе явма, урокçенче илнĕ пĕлĕве анлăлатма, пионер ретне илме, физкультурăпа спорт ăмăртăвĕсене ирттерме, обществăллă-усăллă ĕç тума пухăнаççĕ. Çавăн пекех сборсенче пионерсем пирĕн аслă çулпуçсен В. И. Ленинпа И. В. Сталин пурнăçĕпе тата революциллĕ ĕçĕсемпе тĕплĕн паллашаççĕ, коммунизмăн аслă стройкисем çинчен, промышленность, ялхуçалăхĕ, наука тата техника ситĕнĕвĕсем çинчен докладсемпе каласусем ирттереççĕ.

Сборсенче çавăн пек ыйтусем партин çамрăк йăрăва коммунизмла воспитани пама пулăшать. Çавăнпа ĕнтĕ ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн 7-мĕш пленумĕ пионерсен сборĕсене тĕплĕн хатĕрленсе ирттерме хушрĕ.

Шупашкар хулинчи 6-мĕш номерлĕ шкулти 2-мĕш класра вĕренекен пионерсен отрядĕнче «Сталин—пирĕн кун-çул» тема тăрăх сбор пулса иртрĕ. Çак сбора пур енчен те тĕплĕн хатĕрленнĕ. Ăна ирттерес умĕн пионерсем Сталин юлташ çинчен çырнă калавсемпе сăвăсене вуланă. Отряд вожатăйĕ, 8-мĕш класра вĕренекен Елена Иванова комсомолка пионерсене Сталин юлташăн ача чухнехи пурнăçĕпе паллаштарнă, вăл мĕнле вĕренни çинчен тĕплĕ каласа панă. Л. Степанова учительница пионерсене Сталин юлташ пирĕн халăхăн савăнăçлă пурнăçне тума В. И. Ленинпа пĕрле мĕнле кĕрешни çинчен каласа панă.

Сбора 2-мĕш класра вĕренекен пионерсемпе шкул ачисем пурте пухăннă. Малтан ачасем И. В. Сталин пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен Чăваш педагогика институтĕнче 2-мĕш курсра вĕренекен Егорова студентка каласа панине итленĕ. Унтан Лидия Бостина «Аслă Сталин» ятлă, Тамара Александрова «Сталин — пирĕн кун-çул» ятлă сăвăсене каласа панă. Сăвăсем калаккă хыççăн ушкăнпа «Эпир—шкул ачисем» тата «Çулпуçăмăр Сталин» юрăсене юрланă. Ун хыççăн «Сталин ятне савса», «Сталинпа закон» ятлă сăвăсене Рая Анисовăпа Шура Григорьева пионеркăсем каланине итленĕ. Юлашкинчен вăйăсем выляннă.

Çак сбор, паллах, пионерсемпе шкул ачисене Сталин юлташăн сăнарĕпе паллаштарма, вĕсене коммунизмла воспитани пама пулăшрĕ. Çак класри пионерсем хушшинче вĕренÿ паххалăхĕ куллен-кун ÿссех пырать, 2-мĕш чĕрĕкре ку отрядра япăх вĕренекен пĕр пионер та çук.

Сбор усăллă пултăр тесен, ăна ирттерме тĕплĕн хатĕрленмелле. Шупашкар хулинчи арçын ачасен 2-мĕш номерлĕ шкулĕнчи отрядсенче те сборсене хатĕрленсе ирттерес ĕç çине тĕплĕ пăхаççĕ, çавăнпа та кунта сборсем пионерсемпе шкул ачисене коммунизмла воспитани парас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Нумаях пулмасть çак шкулти 4-мĕш классенчи отрядсенче пионерсене социализмлă пурлăха упрама вĕрентекен сбор пулса иртрĕ. Хăшпĕр пионерсемпе шкул ачисем кĕнекесене ÿсрама пĕлмен, вĕсене хĕрхенмесĕр чĕрсе пăрахни те, кăранташпа хуратни те пулнă. Çакна шута илсе, шкулти дружина совечĕ 4-мĕш классенче «Кĕнеке мĕнле пулать» темăпа сбор ирттерме йышăннă.

Ку сбора 4-мĕш классенчи пионерсемпе шкул ачисем пурте хатĕрленчĕç. Пĕр отряд «Кĕнекене хакла» ятлă выставка турĕ, тепĕр отряд—«Кĕнекесем çинчен аса килнĕ шухăшсем» ятлă альбом хатĕрлерĕ, виççĕмĕш отряд—кĕнекесем çинчен фотомонтаж турĕ. Отряд совечĕсем классенче пионерсем учебниксемпе кĕнекесене мĕнле усранине тĕрĕслесе тухрĕç. Вырăс чĕлхи урокĕнче пионерсемпе шкул ачисем «Эпĕ кĕнекене мĕншĕн юрататăп?» темăпа сочинени çырчĕç. «Б» паллăпа çырнă сочиненисенчен уйрăм выставка турĕç. Кашни отрядрах ятарласа кĕнеке çинчен стена хаçачĕсем кăларчĕç. 4-мĕш классенче вĕренекен пионерсем типографийĕ кайса килчĕç. Унта вĕсене кĕнекесемпе хаçатсем мĕнле пичетленсе тухнине каласа панă тата кăтартнă. Çапла вара пионерсем хăйсем кĕнеке туса кăларма нумай ĕçлемеллине курнă.

Сбора 4-мĕш классенче вĕренекен шкул ачисем пурте пычĕç. Малтанах вĕсем пирĕн аслă çулпуçсем В. И. Ленинпа И. В. Сталин кĕнекесене мĕнле хаклани çинчен пĕчĕк доклад итлерĕç. Сбора пынă чăваш писателĕ Стихван Шавлы писательсемпе поэтсем кĕнекесене мĕнле çырни çинчен каласа пачĕ. Типографинче ĕçлекен инженер Андреев юлташ шкул ачисем типографине экскурсие пырсан мĕн курни çинчен каларĕ. Ун хыççăн пионерсем «Эпĕ кĕнекене мĕншĕн юрататăп» ятлă хăйсем çырнă сочиненисене вуларĕç, кĕнекесем çинчен çырнă сăвăсемпе калавсене вуласа пачĕç. Сбор вĕçленес умĕн кĕнекесене лайăх ÿсракан пионерсене кĕнекесем парса парнелерĕç. Ун хыççăн пионерсем юрларĕç, ташларĕç.

Çак сбор хыççăн пионерсем кĕнекесене лайăх усрама пуçлани курăнать.

Пионерсене воспитани парас ĕçре кирлĕ формăсенчен пĕри — тематикăллă сборсем. Хĕрлĕ Чутайри вăтам шкулти 6-мĕш «С» класри отряд «Коммунизмăн аслă стройкисем» темăпа сбор ирттернĕ. Ку сбора класс руководителĕ Елизавета Герасимовна Шалфеева кĕске сăмах каласа пуçларĕ. Ун хыççăн Юрий Туйманов — Куйбышеври, Римма Осипова — Каховкăри, Роза Клокова—Сталинградри гидроэлектростанцисем çинчен, Зоя Эзенкина—Атăлпа Дона пĕрлештерни çинчен, Галина Хохлова—Туркменири тĕп канал çинчен каласа пачĕç. Эрик Терсков, Зина Аргалькина, Юрий Туйманов пионерсем «Экскаваторщик», «Атăл», «Скрепер-автомат» ятлă сăвăсемпе калавсем вуласа пачĕç. Ун хыççăн пионерсем юрăсем юрларĕç, ташларĕç, выляреç.

Малтанах çакна палăртмалла. Сборта мĕн калани çинчен пионерсем малтан та пĕлнĕ. Анчах та сбор пирĕн çĕршыв кунтан кун аталанса пынипе вĕсене тĕплĕ кăтартса пачĕ.

Шупашкар хулинчи хĕрачасен 3-мĕш вăтам шкулĕнче 6-мĕш класри отрядра пионерсене вĕренме пулăшакан «Вĕренме вĕрен» темăпа сбор ирттерме палăртнă. Сбора ирттерме тĕплĕн хатĕрленеççĕ. Отряд вожатăйĕ класс руководителĕпе пĕрле В. И. Ленин, И. В. Сталин, А. М. Горький ача чухне мĕнле вĕренни çинчен калакан материалсем пухса хатĕрленĕ. Çав материалсемпе халĕ пионерсем паллашаççĕ. Ку сборта Таисия Ивановна Зайцева преподаватель шкул ачисен мĕнле вĕренмелли çинчен доклад туса парать, Тамара Боринская—В. И. Ленин вĕренни, Лукина пионерка—И. В. Сталин вĕренни, Аня Кордус — А. М. Горький мĕнле вĕренни çинчен каласа пама хатĕрленеççĕ. Сборта отличниксем хăйсем мĕнле вĕренни çинчен каласа параççĕ. Çакăнпа пĕрлех пионерсем Фонвизин çырнă «Недоросль» ятлă комедин пĕр пайне, Митрофанушка мĕнле вĕреннине кăтартма хатĕрленеççĕ. Нина Егорова Илья Обломов мĕнле вĕренни çинчен каласа парать.

Анчах та хăшпĕр шкулсенче пионерсен сборне ирттерес ĕçе хакламаççĕ. Ишлей районĕнчи Энлимĕркассинчи пуçламăш шкулта нумай пулмасть «Пионерсем—Тăван çĕршывăн патриочĕсем» ятлă сбор ирттернĕ. Ку сбора пионерсем хатĕрленмен. Çавăнпа ĕнтĕ сборта аслă вожатăйăн Яковлева юлташăн докладне кăна итленĕ, тухса калакансем пулман, вăййăсемпе ташăсем ирттермен, юрăсем юрламан.

Хăшпĕр шкулсенче пионерсен сборĕсене сайра-хутра кăна ирттереççĕ. Сăмахран, Красноармейски вăтам шкулĕнче отрядсен сборĕсене ирттермеççĕ. Савнашкалах Советски районĕнчи Асламасри çичĕ çул вĕренмелли шкулта та отрядсенчи сборсене ирттерес ĕçе пăрахăçа хăварнă.

ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн VII-мĕш пленумĕ кăтартса панă тăрăх, пионерсен сборĕсене пуху евĕрлĕ анчăх мар ирттермелле. Пионерсене сбора обществăллă-усăллă ĕç тума, экскурси ирттерме, походсене кайма, спорт вăййисене выляма, физкультура ăмăртăвĕсене ирттерме те пухма юрать.

Пионерсемпе шкул ачисене коммунизмла воспитани парас ĕçре сборсемпе анлăн усă курмалла.

Н. ЕГОРОВ.

„Партин колхоз строительствинчи тĕп задачи—ялхуçалăх артелĕсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен малалла çирĕплетесси, колхозсен обществăллă харпăрлăхне ӳстерсе пырасси пулать“

(ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн 1947 çулхи февральти пленумĕ йышăннă постановленирен)

Коммунистсем—малти ретре

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн февральти пленумĕ «Ялхуçалăхне вăрçă хыççăнхи вăхăтра вăйлатмалли мерăсем çинчен» йышăннă постановлени колхозри пуçламăш парторганизацисен ĕçне тĕпрен улăштарса çĕнетме хушрĕ. Парторганизацисен, политикăллă ĕçе анлă сарса, ялхуçалăхĕ умĕнче тăракан задачăсене мĕнпур колхозниксене ăнлантарса памалла пулнă, хуçалăха ӳсаса малалла аталантарассишĕн массăсене кĕрешӳве çĕклеме тивнĕ.

Пирĕншĕн, ялти коммунистсемшĕн, февральти пленум решенийĕ ĕç программи пулса тăчĕ. Çавна пурнăçлассишĕн колхозри пуçламăш парторганизаци мĕнпур вăя хурса ĕçлерĕ. Партин февральти пленумĕн решенине коммунистсен пухăвĕнче сӳтсе явнă хыççăн, хамăр колхоза вăйлатмалли майсене палăртрăмăр. Парти ялхуçалăхĕ умне лартнă задачăна, хамăр артель умĕнче тăракан ĕçсем пирки мĕнпур колхозниксене ăнлантарса патăмăр. Çак ĕçе парторганизаци ялти активпа пĕрле колхозниксен пухăвĕсенче, калаçусем урлă пурнăçа кĕртрĕ. Кун пек туни колхозниксен ĕçри хастарлăхне ӳстерчĕ, ситĕнӳсем тума хавхалантарчĕ.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче чи кирли вăл тырпул тухăçлăхне тăтăш ӳстерсе пырасси, артель хуçалăхне малалла тĕреклетесси пулчĕ. Парторганизаци колхозри пĕр отраслĕн ĕçĕпе те интересленмесĕр тăма пултарайман, пур çĕрте те унăн влиянийĕ кирлĕ пулнă. Тĕслĕхшĕн юлашки виçĕ çулта çуракине хатĕрленсе ирттерес, тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас, обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçсем пирки коммунистсен пухăвĕсенче 12 хутчен сӳтсе явнă.

Паллă ĕнтĕ, сӳтсе явнă ыйтусем тăрăх решенисем йышăнни çур ĕç çеç-ха. Чи кирли вăл—решенисене пурнăçа кĕртесси. Партиллĕ ĕçре çакăн çине эпир тимлĕ пăхатпăр.

Парторганизацин усă пухăвĕ пĕлтĕр тырпул пухса кĕртес умĕн колхоз председателĕн, колхоз агрономĕн тата уй-хир бригадин бригадирĕн отчечĕсене итлерĕ, тырпул пухса кĕртме, государствăна тырă пама хатĕрленес ĕçре çитменлĕхсем пуррине палăртрĕ. Пуху коммунистсене социализмлă ăмăртăва анлăрах организацилеме кирлине палăртса хăварчĕ.

Пуху решенийĕ коммунистсемшĕн закон пулса тăчĕ. 4-мĕш уй-хир бригадинче ĕçлекен Е. Дмитриев коммунист пуçарнипе тырпула хăвăрт тата тăкаксăр пухса кĕртессишĕн, государствăна срокчен тырă парса татассишĕн ăмăрту хăвăтлă сарăлчĕ. Тăваттăмĕш бригада пур кăтартусемпе те—тырпул тухăçлăхĕпе те, ĕç хăвăртлăхĕпе те колхозра малти рете тухрĕ, анчах социализмлă ăмăрту ытти бригадăсемшĕн те питĕ усăллă пулчĕ, вĕсем те уй-хир ĕçĕсене лайăх туса ирттерчĕç. Ялхуçалăх артелĕ тырă хатĕрлемелли плана срокчен малтан тултарчĕ.

Колхозри коммунистсен тĕп задачи вăл—артель хуçалăхне пĕрмай ӳстересси, обществăллă интереса колхозниксен харпăр хăй интересĕсемпе тĕрĕс çыхăнтарасси. Контроль правине усă курнă чухне парторганизаци пĕр тĕллев лартать: унăн сĕнĕвĕсене колхоз правленийĕ активлă йышăнса илтĕр, вĕсене пуçарулла пурнăçласа пытăр. Парторганизаци правлении тӳрремĕнех хăй пурнăçламалли ĕçсене хутшăнмасть, вăл ăна ситменлĕхсене палăртма, ситĕнӳсем тумалли майсене кăтартса пама, коммунистсем урлă колхозниксене хастарлă ĕçлеме пулăшса пырать. Лартнă тĕллеве пурнăçлама парторганизацие колхоз правленийĕ тачă çыхăнса ĕçлессĕ, вĕсен ку енĕпе ĕç меслечĕсем кăна уйрăм.

Партиллĕ-массăллă, партиллĕ-организациллĕ ĕçсене вăйлатса пырса, парторганизаци вăрçă хыççăнхи çулсенче колхоза чылай пысăк ӳсĕм тума пулăшрĕ. Кăна çакăн пек тĕслĕх аван çирĕплетсе парать:

1949 çулхипе танлаштарсан, иртнĕ çулта кашни гектартан 3,32 центнер ытла тĕштырă пухса кĕртнĕ. Çакă вăл, колхозĕпе илес пулсан, 1949 çулхинчен 1.212 центнер ытла тĕштырă туса илнине пĕлтерет.

Продуктивлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре те хăшпĕр ситĕнӳсем тунă. Ĕне выльăх, кайăк-кĕшĕк ĕрчетмелли заданисене ирттерсе пурнăçланă, сурăх ферми те плана тултарнă. Анчах сыснасем енĕпе план тулман. Çакăншăн, чи малтан, коммунистсем ответлă. Эпир халĕ çак ситменлĕхе пĕтерме кирлĕ майсене палăртатпăр, правленипе пĕр пулса сысна фермине вăйлатассишĕн кĕрешетпĕр.

Колхозăн обществăллă хуçалăхне малашне халиччентинчен хăвăртрах аталантарса пыма пирĕн пурте сителĕклĕ. Государство паракан пулăшупа, вырăнти майсемпе тĕрĕс усă курас ĕçе организацилесси—колхоз правленийĕпе парторганизацин ответлă тивĕçĕ тесе шутлатпăр.

М. ВОРОБЬЕВ,
колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕ.

Ыран, февралĕн 28-мĕшĕнче, ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн февральти пленумĕ **«Ялхуçалăхне вăрçă хыççăнхи вăхăтра вăйлатмалли мерăсем çинчен»** постановлени йышăннăранпа 5 çул тултарать.

Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче нимĕç фашисчĕсен вăрă-хурахла çарĕсем пирĕн чечеклене аталаннă социализмлă ялхуçалăхне пысăк сиен кӳчĕç. Паттăр совет халăхĕ коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, тĕрĕс ĕçшĕн кĕрешсе, вăрçăра чаплă çĕнтерӳ турĕ, нимĕç захватчикĕсене тĕпĕпех çапса аркатрĕ.

Вăрçă пынă вăхăтрах-ха, уйрăмах вăл çĕнтерӳллĕ вĕçленнĕ хыççăн Тăван çĕршывра вăрçă суранĕсене пĕтерсе халăх хуçалăхне малалла аталантарас тĕлĕшпе хĕрӳллĕ ĕçсем пуçланчĕç.

Ялхуçалăхне вăрçă хыççăнхи вăхăтра вăйлатасси пысăк вырăн йышăнса тăнă. Халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин юлташ çул кăтартса пынипе çав ыйтăва кĕске вăхăтра татса панă. Социализмлă ялхуçалăхĕ халĕ ĕнтĕ вăрçă умĕнхи шайран малалла чылай пысăк утăм тунă.

Социализмлă ялхуçалăхне вăрçă хыççăнхи вăхăтра хăватлă аталантарас енĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн 1947 çулхи февральти пленумĕн постановленийĕ историллĕ вырăн йышăнса тăрать.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн февральти пленумĕ йышăннă постановленипе çутçанталăка улăштарса çĕнетмелли сталинла программа, обществăллă продуктивлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх план уйрăмми тачă çыхăнса тăраççĕ. Ял ĕçченĕсем çав историллĕ постановленисене пурнăçлас тĕлĕшпе те паллă ситĕнӳсем турĕç.

Паян «Чăваш Коммуни» хаçат Чурачăк районĕнче сортлă вăрлăх туса хатĕрлес енĕпе ĕçлекен «Совет» колхозран килнĕ çырусене пичетлет. Вĕсем ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн февральти пленумĕн постановленине пурнăçлассишĕн ялти большевиксем мĕнле кĕрешнине кăтартса параççĕ.

«Совет» колхоз—вăтам колхоз. Унăн ĕçĕнче çитменлĕхсем те пур-ха. Анчах вăл çитменлĕхсене пĕтерес, çулран çул пысăкрах ӳсĕмсем тăвас тесе, колхозниксем тăрăшса ĕçлеççĕ.

Çитес çулхи вăйлă тырпулшăн

Пирĕн 4-мĕш уй-хир бригади пĕлтĕр ăнăçлă ĕçлерĕ, тырпул туса илмелли государство планне 108 процент тултарчĕ. Кашни гектартан пухса кĕртнĕ тырпул тухăçлăхĕ вăтам шутпа 16,4 центнера яхăн çитрĕ, социализмлă ăмăртура иккĕмĕш вырăна тухнă бригадăран 2,8 центнера яхăн ытларах тырпул туса илтĕмĕр. Уйрăмах сурхи тулă, сĕлĕ, ыраш тухăçлă пулчĕç. Кĕскен вĕсен агротехники пирки чарăнса тăрас килет.

Сурхи тулла эпир кĕрхи çĕртмене суркунне сӳрелени хыççăн сеялкăпа акрăмăр. Çакăн пек туни тăпрара нӳрĕ ытларах тытса хăварма пулăшрĕ. Кунсăр пуçне тата хĕлле юр тытса хăварнине те палăртмалла. Кашни гектар пуçне минераллă удобренисенчен 1,5 центнер аммони сульфачĕ панă. Ăнса пулнă тулла комбайнпа пухса кĕртрĕмĕр.

Сĕлĕ акса тăвас ĕçре эпир агрономи наукипе тата малта пыракансен практики кăтартса панă çĕнĕ меслетпе усă куртăмăр, сĕлле ансăр ретсем туса трактор сеялкипе акрăмăр. Çак меслетпе акни гектар пуçне вăтам шутпа 4,73 центнер ытларах сĕлĕ пухса кĕртме май пачĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем ытти ялхуçалăх культурисен агротехникине те пĕлтĕр тимлĕ пурнăçласа пычĕç.

Бригада кăçалхи çуракине ирттерме тимлĕ хатĕрленет. Пысăк çĕр лаптăкĕ çинче икĕ хут юр тытса хăварнă, вырăнти условисенче тухăçлă пулакан сортлă вăрлăхсем çителĕклĕ хатĕрленĕ. Вĕсене пурне те тасатса хунă. Уй-хире вырăнти удобренисем кăларасси кунсерен вăйланса пырать. Бригада членĕсем тырпул тухăçлăхне малалла ӳстерес тĕлĕшпе вăй-хала шеллемесĕр ĕçлессĕ, 1952 çулта çĕнĕ ситĕнӳсем тăвассишĕн кĕрешессĕ.

П. ЕГОРОВ.

Цифрăсемпе фактсем

⊙ 1949 çулта Кĕçĕн Çавал çинче виçĕ колхоз пĕрле тунă гидроэлектростанцие ĕçе янă. Станци «Совет» колхоз колхозникĕсен килĕсене, виçĕ ферма çуртне çутă парать. Электричество вăйĕпе авăн çапас, тырă сортласа тасатас ĕçсене механизациленĕ.

⊙ Юлашки çулсенче артель икĕ молотилка, виçĕ сортировка, икĕ электромотор тата ытти машинăсем те чылай илсе килнĕ. МТС пулăшнине шута илес пулсан, халĕ тырпул туса илмелли тĕп ĕçсен пысăк пайне механизациленĕ.

⊙ 1952 çулта колхоз клубĕ тумалла. Унта библиотека, вуламалли, кино кăтартмалли тата ытти залсем те пулмалла.

⊙ Электричество вăйĕпе ĕçлекен армана хута яма палăртнă. Ун валли кирлĕ хатĕрсене чылайăшне туяннă та ĕнтĕ.

⊙ Фермăсене шыв парса тăрассине лайăхлатмалла. Ку тĕлĕшпе колхоз гидротаран туяннă. Сысцасене хупса усрама 1952 çулта стандартлă çĕнĕ вите пулать.

⊙ Колхоз правленийĕн ларăвĕнче 1952 çулта лашасен ăратне лайăхлатас ыйтăва пăхса тухнă. Брабансон ăратлă ăйăр илме йышăннă.

«Совет» колхозра иккĕмĕш çул ĕнтĕ агротехникăна вĕренмелли виçĕ çуллăх курс ĕçлет.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: колхоз агрономĕ (сулăхайран иккĕмĕшĕ) А. Виссарионов юлташ колхозниксемпе практикăллă занятти ирттерет.

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Тăван çĕршыв хушнă пек ĕçлессишĕн

Ял ĕçченĕсем иксĕлми вĕресе тăракан телейлĕ пурнăçпа пурăнаççĕ. Пуçаруллă та аслă сынсене пăхса çитĕнтерчĕç Совет влаçĕпе колхоз строй.

Чун-чĕререн юратакан Тăван çĕршывăн! Çак шухăша кăмăлпа ĕçлессĕ колхозниксемпе колхозницăсем. Тăван çĕршыв хăвачĕ—пирĕн хăват, унăн пуянлăхĕ—пирĕн пуянлăх, теççĕ вĕсем.

Аслă Отечественнăй вăрçă хыççăнхи çулсенче эпир нумай мала кайрăмăр, нумай ӳсрĕмĕр. ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн февральти пленумĕн решенине пурнăçласа, «Совет» колхоз членĕсем тырпул тухăçлăхне чылай ӳстерчĕç, вăрçă умĕнхипе танлаштарсан, обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç те лайăхланчĕ.

Çĕрĕç культурине ӳстерме Совет государстви питĕ лайăх майсем туса пачĕ. Колхозра МТС тăвакан ĕç çулсерен ӳсе пырать, пирĕн хамăрăн та тĕрлĕ машинăсем нумай. Уй-хирти тĕп ĕçсене механизацилесе çитеретпĕр ĕнтĕ. Акă пĕр тĕслĕх: 1950 çулхипе танлаштарсан, иртнĕ çулта комбайнпа 70 гектара яхăн ытларах тырпул пухса кĕртнĕ, тракторсемпе 68 гектар ытла кĕрхи çĕртме тунă. Ытти чылай ĕçсем пирки те çавнах калама пулать.

Агрономи наукипе малта пыракансен опычĕпе усă курас тĕлĕшпе те хăшпĕр ситĕнӳсем турăмăр. Сăмахран, хире юр тытса хăварас ĕçе колхозниксем пурте ĕнтĕ хăйсен пысăк тивĕçĕ тесе шутлаççĕ. Халиччен эпир тăпрапа 18—20 е 20—22 сантиметр тарăнăш сухаланă. Пĕлтĕртен пуçласа вара сухалакан сие тарăнлатса пыма шут тытрăмăр. 120 гектар çинче кĕрхи çĕртме тата çĕртме сухине 24—25 сантиметр тарăнăш сухаласа хăвартăмăр. Суртрипе кĕрхи çĕртме тунă пусса акни тырпул тухăçлăхне ӳстерни ял ĕçченĕсемшĕн паллă. Пирĕн колхоз кăçалтан тытăнса суркунне сухаласа суртри акассине пăрахăçа кăларать, суртри акмалли пусăсене пĕлтĕр пĕтĕмпех кĕрхи çĕртме туса хăварнă.

Агротехникăн çĕнĕ меслечĕсене производствăна кĕртес енĕпе уйрăмах тăрăшса ĕçлемелле. Унсăрăн малалла кайма çук. Эпир хамăр вырăнти условисенче хĕреслĕ майпа акни мĕнле усă панине тĕрĕслесе пăхрăмăр. Ӳсентăрансем ӳсе çитĕннĕ вăхăтра висĕм çул çанталăк типĕ тăчĕ. Ун пек пулчĕ пулин те, хĕреслĕ майпа акнă участокра çав çул, ретлĕ йĕркепе акнă участокрипе танлаштарсан, кашни гектартан 3,3 центнер ытларах сурхи тулă пухса кĕртрĕмĕр.

Хуратулпа вире сарлака ретпе акса туса пысăк тухăç илни çинчен хаçатсенче СССР Ялхуçалăх министерстви пĕлтернине пичетлесе кăларнăччĕ, унта, сăмах май каласан, çав меслетпе акнă хуратул тухăçлăхĕ гектар пуçне 4—5 центнер таран ӳснине палăртнăччĕ. Ку тĕлĕшпе иртнĕ çулта эпир те сăнавсем туса пăхрăмăр. Виççĕмĕш уй-хир бригади виçĕ гектар çине хуратулла сарлака ретпе акса хăварчĕ, вăл гектартан 15,7 центнер тухрĕ, ку вăл колхозĕпе гектартан пухса кĕртнĕ хуратул тухăçлăхĕнчен 7 центнер ытларах.

1947 çулхинчен чылай мала кайрăмăр. Юлашки виçĕ çул хушшинче ĕçкунĕ тăрăх тупăшсем валеçсе пăнинчен те çакна аван куратпăр. Пĕлтĕр 1950 çулхинчен çур килограмм ытларах, 1951 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсем тăрăх вара 2,2 килограмм яхăн ытларах тĕштырă валеçнĕ. Кăçал кашни ĕçкунĕ çине 3 килограмм та 340 грамм тĕштырă тивнĕ. Çакна каласа хăвармалла: колхоз государствăпа ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесе памалли плана çулсерен чыслă пурнăçласа пырать.

Анчах пирĕн лăпланса ларма сăлтавсем çук, ун пек йăла пире чыс туман пулĕччĕ. Тырпул тухăçлăхне ӳстерсе пымалли, выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстермелли ĕçсене те эпир пĕр тикĕс, кирлĕ таран пурнăçа кĕртсе пыраймастпăр-ха. Кăна çакăн пек тĕслĕхпе те çирĕплетсе пама пулать: 1951 çулта 4-мĕш бригада кашни гектартан 16,4 центнера яхăн тĕштырă туса илме пултарчĕ, ытти виçĕ бригада пирки çавна калама çук, вĕсен тырпул тухăçлăхĕ пĕчĕкрех пулчĕ.

Паллă ĕнтĕ, çĕрĕç культурине лайăхлатас ĕçре МТС тĕп вырăн йышăнать. Анчах унăн пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Вĕсенчен пĕрри вăл договорпа пăхнă ĕçсене пĕтĕмпех туса паманни.

1951 çулта пирĕн колхоз акнă мĕнпур ĕç лаптăкĕнчен кашни гектар пуçне 14 центнера яхăн тĕштырă туса илчĕ. Кăçал эпир кашни гектартан çĕр пăтран кая мар тырпул пухса кĕртме обязательство илтĕмĕр. Ăна пурнăçлама пур майсем те çителĕклĕ, колхозниксем хăйсен тивĕçне лайăх ăнланаççĕ.

Н. НИКИТИН,
колхоз председателĕ.

Чыслă тивĕç

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн февральти пленумĕн историллĕ решенийĕ ялхуçалăхне аталантарас ĕçре тĕп вырăн йышăнса тăчĕ, вăл колхозниксемпе колхозницăсене, механизаторсемпе ялхуçалăх специалисчĕсене çĕнĕ ситĕнӳсем тума хавхалантарса пычĕ. Совхозсемпе колхозсем кĕске вăхăтрах чаплă çĕнтерӳ турĕç. Иртнĕ çулта Тăван çĕршыв 7 миллиард та 400 миллион пăт тĕштырă пухса кĕртрĕ. Çакă вăл совет стройĕн тата колхозсен иксĕлми вăй-хăватне яр-уççăн кăтартса парать.

Обществăллă пурнăçа хăйсем тытса тăракан пирĕн сынсем çутçанталăка улăштарса çĕнетессĕ. Хăватлă техникăпа хĕçпăшалланнă социализмлă ялхуçалăхĕ халăх валли апат-çимĕç, промышленность валли чĕртавар ытлăн-ситлĕн туса парассишĕн ăнăçлă кĕрешет.

Сталин саманинче ял çыннисем тĕлĕнмелле лайăх ĕçсем тăваççĕ. Вĕсем яланах малалла каяс, çĕнĕ ситĕнӳсем тăвас кăмăл-туйăмпа пурăнаççĕ. Ку тĕлĕшпе «Совет» колхозри Михаил Федорович Федоров колхозник калани интереслă.

— Урăхла юрамасть,—тет вăл,—пирĕн çине пĕтĕм тĕнче пăхать.

Михаил Федорович ватă ĕнтĕ. Анчах ĕç тесен лара-тăра пĕлмест, пĕлтĕр виççĕр ĕçкунĕ ытла тунă. Çакăншăн ăна пĕтĕм ял-йыш хисеплесе чыслать. Ĕçкунĕ тăрăх вăл хăй кăна 64 пăт ытла тырă илнĕ.

Колхозра Федоров юлташ пек ĕçченсем сахал мар. З. Сидоров, М. Васильева, П. Сергеева, М. Трофимова юлташсен 1951 çулта тунă ĕçкунĕсен хисепĕ тăватçĕртен те иртсе кайнă. «Совет» ялхуçалăх артелĕнче ĕçкунĕсен минимумне тултарман пĕр колхозник та çук.

Обществăллă ĕçе колхозниксем активлă хутшăнни, ăна ытти ĕçсенчен маларах хуни артель хуçалăхне вăрçă хыççăнхи вăхăтра тĕреклетсе çирĕплетме май пачĕ. Тăван çĕршыва тырпул хатĕрлесе парассишĕн, ĕçкунĕсем тăрăх тырă валеçесси çулсерен ӳссе пычĕ. Колхозниксем тулăх пурăнаççĕ. Кашни килте Ильич лампочкисем çунаççĕ. Электричество вăйĕпе ялхуçалăх ĕçĕсене механизацилеççĕ.

«Совет» колхозран Чурачăк районĕнчи нумай ялхуçалăх артелĕсем пример илме тивĕç. Кунта вăйлă тырпул мастерĕсем пур. Акă иæпĕр тăваттăмĕш уй-хир бригадин бригадирĕ пулнă Пантелеймон Егорович Егоров юлташа. Унăн бригади иртнĕ çулта кашни гектартан 19,56-шар центнер сурхи тулă, 18,74-шер центнер сĕлĕ, 18-шар центнера яхăн ыраш пухса кĕртнĕ.

— Колхозниксем хытă тăрăшрĕç,—тет Пантелеймон Егорович,—агротехникăна лайăх пурнăçласа пычĕç. Ун пек чухне вăйлă тырпул пулать вăл.

Чылай колхозсем пирки çавна калама çук-ха. «Совет» колхозпа танлаштарсан, «Динамо», «Красный путиловец», «Красное Сормово», «Самолет», «Стахановец» ялхуçалăх артелĕсем тырпул тухăçлăхĕ тĕлĕшпе кая юлса пыраççĕ. «Броневик», «Союз», «Комсомолец», Ворошилов ячĕпе тăракан, «Авангард», «Слава» колхозсенче кок-сагыз агротехникипе япăх пурнăçлаççĕ. Сăмах майĕн çакна каласа хăвармалла: кок-сагыз Чурачăк районĕнче техникăллă культурăсенчен тĕп вырăн йышăнмалла. Чылай колхозсенче тырпул тухăçлăхĕ пĕчĕкки, кок-сагыз туса илес ĕçе кирлĕ пек йĕркелемении агрономсемпе ялхуçалăх артелĕсен руководителĕсене тарăн шухăшлаттармалла. Çитес икĕ-виçĕ çул хушшинче тырпул тухăçлăхне тăтăшлăн ӳстерме вĕсен мĕн кирлине пĕтĕмпех тăвас пулать. Машина-трактор станцин техникипе ытларах усă курни кирлĕ, колхозниксен агрономипе зоотехника пĕлĕвне тăтăшах хăпартса пымалла, курăк акмалли уйлă çĕрĕç системипе пăхакан пур ĕçсене те тимлĕ пурнăçлассишĕн кĕрешмелле. Вĕсемсĕр, çав ĕçсене пурнăçламасăр малалла каясси çинчен шухăшлама та май килмест.

«Совет» колхоз членĕсем агрономи наукипе зоотехникăна вĕренме вăхăта шеллемеççĕ. Колхоз агрономĕ ертсе пынипе кунта иккĕмĕш çул ĕнтĕ агротехника групни ĕçлет, выльăх-чĕрлĕх пăхакансем те уйрăм группăра вĕренеççĕ. Вĕренни ситĕнӳсем тума пулăшнипе колхозниксем лайăх ăнланаççĕ. Вĕсем наука ситĕнĕвĕсене, малта пыракансен опычĕсене хапăл туса йышăнаççĕ, производствăна кĕртсе пыраççĕ. Тырпула хĕреслĕ майпа тата ансăр ретпе акасси, тăпрара нӳрĕ ытларах пултăр тесе, кĕрхи çĕртмене суркунне сӳрелесси, тăпран сухалакан сипне тарăнлатасси йăлана кĕрессĕ ĕнтĕ. Çавсем вĕсем пурте тырпул тухăçлăхне ӳстереççĕ. Районта малта пыракан артелĕн тырпул туса илес ĕçри опычĕсене ялхуçалăх специалисчĕсен анлăрах сармалла. Çакă вăл кая юлса пыракан колхозсене пысăк пулăшу пани пулĕччĕ.

«Совет» ялхуçалăх артелĕн хăйĕн те çитменлĕхсем пур-ха. Малашне хăвăртрах аталанса пыма унăн усă курман резервсем нумай. Чи малтан акă мĕн пирки чарăнса тăмалла: колхозра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç кирлĕ вырăнта тăмасть. Чăн та, обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана сыснасемсĕр пуçне пĕтĕмпех тултарнă, артель государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене вăхăтра парса тăрать. Анчах ку çителĕксĕр. Фермăсенчен пысăк тупăш илмелле тăвас пулать. Çавăн пек чухне обществăллă хуçалăх тата та хăвăртрах ӳссе пырать. «Совет» артелĕн фермăсенчен илекен тупăш халлĕхе пĕчĕккĕ-ха. Ĕнесенчен сĕт, сурăхсенчен çăм, чăхсенчен çăмарта сахал илеççĕ. Ку вăл, чи малтан, паха выльăх апачĕ хатĕрлеме çителĕклĕ майсем туманнинчен килет. Улăх-çаран сахал колхозсемшĕн выльăх апачĕсем акса тума пусă çаврăнăшĕсем уйрăмах кирлĕ. Анчах «Совет» колхозра çавăн пек пусă çаврăнăшĕ туман. Выльăхсем валли тымарçимĕç питĕ сахал акаççĕ. Унăн тухăçлăхне ӳстерме тăрăшмаççĕ.

Пусă çаврăнăшĕ пирки сăмах хускатнă май аçă мĕн каламалла; «Совет» колхозра тырпул акса тăвакан 7 уйлă пусă çаврăнăшĕ те, пирĕн шутпа, кивелнĕ, мĕншĕн тесен нумай çул ӳсекен курăксем суршар пусăра кăна акăнаççĕ. Пусă çаврăнăшĕ çапла черетленсе пырать: 1-мĕш уй—таса çĕртме, 2-мĕш уй—кĕрхи тырăсем, сур уя курăксем акаççĕ, 3-мĕш уй—суртри, малтайхи çул усă куракан курăксем сур уй, 4-мĕш уй—таса çĕртме, иккĕмĕш çул усă куракан курăксем сур уй, 5-мĕш уй—кĕрхи тырăсем, 6-мĕш уй—йăранласа лартакан тата пăрса йышши культурăсем, 7-мĕш уй—пĕрчĕллĕ суртрисем.

Пусă çаврăнăшĕнче ялхуçалăх культурисем черетленсе пынинчен çакна асăрхама пулатăратпăр: нумай çул ӳсекен курăксем, суршар пусăсене çеç акнипе пула, хăйсене акнă ĕлĕкхи вырăна вунтăваттăмĕш çулĕнче кăна таврăнаççĕ. Çакă вăл тăпра кĕрпеклĕхне çителĕклĕ таран лайăхлатма пулăшаймасть. Çапла ĕнтĕ, ку ыйту хăйне халлĕн тухса тăракан ыйту мар. Ку вăл тырпул тухăçлăхне çитес çулсенче халиччентинчен хăвăртрах ӳстерсе пырас ыйтупа тачă çыхăнса тăрать.

Районта тĕрĕс пусă çаврăнăшĕсем тăвас ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур. Пĕлтĕр нумай çул ӳсекен курăксем акмалли плана пĕтĕмпе те 38 процент ытларах çеç тултарнă, пĕр çул ӳсекен курăксем, тымарçимĕç çителĕксĕр акнă. Выльăхсене çитерекен тымарçимĕç тухăçлăхне ӳстерме тăрăшманнине палăртмалла. Пĕлтĕр ăна гектартан вăтам шутпа 46,4-шер центнер анчах туса илнĕ, çав вăхăтрах республикăри малта пыракан колхозсем 600-шер центнер таран пухса кĕртеççĕ.

Ялхуçалăх пайĕн те, колхоз руководителĕсен те пусă çаврăнăшĕсене йĕркелес пирки тĕплĕ шутласа пăхмалла.

Чурачăк районĕнчи колхозсем хушма хуçалăхсем тăвас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Сăмахран, кирпĕч производствине 6 колхозра çеç организациленĕ. Çакă ĕнтĕ строительство ĕçĕсем куллен ӳссе пынă вăхăтра çителĕксĕрри каламасăрах паллă. «Прогресс», Калинин ячĕпе тăракан, «Молодая сила» ялхуçалăх артелĕсенче тума палăртнă кирпĕч завочĕсене хăвăртрах ĕçе кĕртме тăрăшмалла.

Хурт-хăмăр, сапсем ĕрчетессине вăйлатмалла. Халĕ районта утарсем туман колхозсем суррипе яхăн шутланаççĕ. Тырпул туса илес тĕлĕшпе чылай ăнăçлă ĕçлекен «Совет» колхозăн утар çук, улмаçырла сачĕ пĕчĕккĕ.

Мĕншĕн-ха Чурачăк районĕнче пĕтĕм республикăра палăрса тăракан колхоз ячĕсене курмастпăр? Унăн сăлтавĕ, пĕрренчен, ялхуçалăх отраслисене пурне те пĕр тикĕс аталантарса пыманнинче. Çак ыйтăва ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕн çывăх вăхăтсенчех татса памалла, пур колхозсене те республикăри чапа тухнă ялхуçалăх артелĕсемпе танлаштарас задача лартмалла.

Колхозсен хуçалăхне нумай енлĕ аталантарса пырас пулать. Çавăн пек тусан вара обществăллă хуçалăхра çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ пулĕ. Тырпул тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх шучĕпе унăн тухăçлăхне чылай ӳстерес задачăна ăнăçлă пурнăçласси те çавăнтан нумай килет.

Чурачăк районĕнчи ял ĕçченĕсем кăçал пысăк обязательствăсем илчĕç. Вĕсем кашни гектартан 100 пăт тĕштырă, 30 пăт кантăр вăрри, 35 пăт кантăр сӳсĕ, 850 пăт çĕрулми пухса кĕртме сăмах пачĕç, ытти культурăсен тухăçлăхне те ӳстерме пулчĕç. Кашни ĕнерен вăтам шутпа 1,400 килограмм сĕт, кашни сурăхран 3 килограмм çăм, кашни чăхран 90 çăмарта илмелле.

Панă сăмаха пурнăçлассишĕн мĕнпур тимлĕхпе ĕçлемелле, суракине тĕплĕ хатĕрленмелле, обязательствăсене пурнăçлама мĕнпур колхозниксене социализмлă ăмăртăва хутшăнтармалла.

Социализмлă ялхуçалăхĕн тĕп задачине пурнăçлассишĕн кĕрешесси — колхозниксемпе колхозницăсен, механизаторсемпе ялхуçалăх специалисчĕсен чыслă тивĕçĕ.

М. ОГОРОДНИКОВ.
(Хамăр корр.).

Халăх демократи çĕршывĕсенче

★

Экономика ыйтăвĕсемпе тĕнчери çĕршывсен Мускавра пулмалли канашлăвĕ умĕн

БУХАРЕСТ, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). кономика ыйтăвĕсемпе Тĕнчери çĕршыв- н Мускавра пулмалли канашлăвĕ Ру- нишĕн усăллă пуласси çинчен Румыни лăх Республикин тулашри суту-илĕвĕ латин председателĕ Георге Савин хăйĕн явленине пичетлесе кăларнă. Унта вăл пла калать:

Румыни халăх хуçалăхĕ малалла ата- нса пынă май, Румыни халĕ урăх çĕр- ывсене тавар нумайрах сутма пулта- ть. Хадиччен урăх çĕршывсене тĕшты- нефть продукчĕсем тата йывăç сутса нă пулсан, халĕ Румыни ытти йышши лĕ таварсене урăх çĕршывсене илсе йма пултарать. Çав вăхăтрах Румыни ăх çĕршывсенче ялхуçалăх машинисем- хатĕрĕсене тата промышленность ту- кăларакан ытти япаласене нумайрах иласшăн.

Румыни ытти çĕршывсемпе пĕр тан алллă тата пĕр пек усăллă йĕрке тă- , сăмахран, Румыни хальхи вăхăтра алипе, Швейцарипе, Австрипе, Фин- ндипе, Аргентинăпа тата ытти чылай ударствăсемпе суту-илӳ туса пынă ке тăрăх, малашне те пĕр-пĕринпе ки- лсе ĕçлеме тăрăшать.

Экономика ыйтăвĕсемпе тĕнчери çĕр- ывсен Мускавра пулмалли канашлăвĕ ипур çĕршывсенчи экономикăна ертсе ракансем пĕр-пĕринпе мирлĕ килĕштер- ĕçленипе çынсен пурнăç условийĕсене йăхлатмалли майсене тупса палăртма лтарĕ, тенĕ юлашкинчен Георге Савин.

Венгрипе Совет Союзĕн туслăх уйăхлăхĕ

БУДАПЕШТ, февралĕн 25-мĕшĕ. АСС). Венгрипе Совет Союзĕн туслăх йăхлăхĕ Венгрире анăçлă иртет. Совет льтури деятелĕсен делегацийĕн пуçлăхĕ П. Скрябин академик ветеринари ин- итутĕнче, сывлăха сыхлас ĕçĕн инсти- тĕнче пулнă. Вăл çав институтсенче ука работникĕсемпе тата специалист- мпе канашланă. Сталинла преми лау- ачĕ Галина Николаева Венгри писате- семпе тĕл пулса калаçнă. Вăл хăйĕн орчествăллă ĕçĕсем, «Жатва» романа крас тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени тата Совет юзĕн паллă писателĕсем çĕнĕрен çырма лтăнакан писательсене мĕнле пулăшса ыни çинчен каласа кăтартнă.

СССР Верховнăй Совет депутачĕ, Кали- нăри ткачиха М. В. Волконская пир- ăр предприятийĕсенче чылайăшĕнче пул- . Вăл Будапештри «Киштекс» фабрикин- станок умне тăрса, хăй мĕнле ĕçленине тартса панă. УССР Верховнăй Совет путачĕ, Сталинла преми лауреачĕ, çĕр мрăк комбайнĕн машинисчĕ В. П. Ку- р шахтăсене анса курнă. Херборн Илан» ятлă штольнăра вăл çĕр кăмрăк мбайнĕпе ĕçлесен ĕç тухăçлăхне мĕнле стерме май пуррине кăтартса панă. Со- т делегацийĕн ытти членĕсем те—Мус- вri «Кожизделие» фабрикăн цех на- льникĕ Ф. М. Кузнецов, архитектор М. Орлов тата МТС директорĕ М. А. укин юлташсем те Венгрири ĕçсынни- мпе тĕл пулса калаçнă.

Уйăхлăха иртттерме Венгрие Уралти лăх хорĕ тата совет артисчĕсем пынă. ĕсен концерчĕсем Венгрире пысăк ăнăç- ăхпа иртеççĕ. Совет кинофильмĕсен фес- ивалĕ те ăнăçлă иртет.

Фредерик Шопен çуралнăранпа 142 çул тултарнине палăртнă

ВАРШАВА, февралĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Польша столицинчи общественность по- яксен аслă композиторĕ Фредерик Шопен çуралнăранпа 142 çул тултарнине палăрт- нă. Варшавăра Острогскийсен пысăк çур- ĕнче (замокĕнче) нумай пулмасть кон- церт залĕ уçнă, çав залра Фредерик Шо- пена хисеплесе чаплă лару ирттернĕ. За- мока Фредерик Шопен ячĕпе тăракан об- щество аллине параççĕ. Унта Шопен про- изведенийĕсемпе алçырăвĕсен архивĕ, му- зей, библиотека, ӳкерчĕксем пулаççĕ, ун- та Фредерик Шопен ячĕпе тăракан обще- ствăн хăшпĕр уйрăмĕсем вырнаçаççĕ.

Совет кинофильмĕсен Монголи Халăх Республикинчи фестивалĕ

УЛАН-БАТОР, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Улан-Баторта, Эльдеб Очи- ба ячĕпе тăракан тĕп кинотеатрта совет кинофильмĕсен фестивалĕ пуçланнă. Фе- стиваль пуçланнă ятпа савăнăçлă пуху ирттернĕ. Çав фестивале хальхи вăхăтра Монголи Халăх Республикинче Монголипе Совет Союзĕн туслăх уйăхлăхĕ пынă май ирттереççĕ. Паян фестиваль пуçланнă çĕ- ре пухăннă çынсене «Большой концерт» ятлă фильм кăтартнă.

Пĕтĕм Индири Мир Совечĕн ларăвĕнче

ДЕЛИ, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Февралĕн 23-мĕшĕпе 24-мĕшĕнче, Дели хули муниципалитечĕн çуртĕнче Пĕтĕм Индири Мир Совечĕн ларăвĕ пулса иртнĕ.

Ларура Инди парламенчĕн членĕ Камат сăмах тухса каланă. Пĕтĕм Индири Мир Совечĕн Индипе Пакистан хушшинче мире сыхламалли килĕшӳ тăвассишĕн пĕтĕм вăя хурса тăрăшас пулать, тенĕ вăл.

Кашмир делегачĕ Дхавантари Кашмир халăхĕ ячĕпе Индири миршĕн тăракансене салам каланă. «Эпир хамăр ыйтусене ют çĕршывсем хутшăнмасăрах татса пама вăхăт çитессине, çавăн çинчен пĕлтерме май килекен кун çитессине кĕтетпĕр», тенĕ Дхавантари.

Ларура Ришикеш Саха сăмах тухса каланă. Вăл Индири миршĕн тăракансене Пĕтĕм Непалри мире хӳтĕлекенсен комитечĕ ячĕпе саламланă. Империалистсем Кăнтăр-Хĕвелтухăçĕнчи Азири миршĕн хăрушлăх кăларса тăратаççĕ. Пирĕн реакциллĕ правительство Гуркх çарĕсене Непалри наци ирĕклĕхĕшĕн пыракан юхăма пусарма ирĕк парать. Непалри тата Индири реакциллĕ вăйсем Америкăпа Англи империализмне пирĕн çĕршыва пырса кĕме пулăшаççĕ.

Миршĕн тăракансем Непала империалистсен çар бази туса хума памĕç, тенĕ юлашкинчен Саха.

Ларура Делири прогрессивнăй организацисен союзĕн секретарĕ Шарма сăмах тухса каланă. Вăл вăрçă пуçарма хĕтĕртекенсен, Даллес евĕрлисен, ирсĕр ĕçĕсене хытă сивленĕ, çав çынсем Китай Халăх Республикине хирĕç вăрçă пуçарма уççăнах чĕнеççĕ, тенĕ. Вăл çавăн пекех США-н влаçра тăракан ушкăнĕсен агрессиллĕ политикине, вĕсем ССР Союзĕ тавраллă çар базисем тунине сивленĕ.

Шарма Инди правительстви умне Инди, Китай Халăх Республики тата ССР Союзĕ хушшинче туслă пурăнасси çинчен килĕшӳ тăвас ĕçе пуçарма требовани лартма сĕннĕ. Унăн сĕнĕвне ларăва пухăннисем тăвăллă алă çупса ырланă.

Пĕтĕм Индири Мир Совечĕн юлашки ларăвĕнче хĕçпăшалсăрланасси çинчен резолюци йышăннă. Унта Индин хăйĕн суту-илӳ ĕçне хĕçпăшал хатĕрлекен государство интересĕсене пăхăнтармалла мар, Индин мĕнпур çĕршывсемпе мирлĕ тата ирĕклĕ суту-илӳ тумалла, çĕршыва экономика тата политика енĕпе йывăрлăха кĕртсе ӳкермелле мар, тенĕ. Резолюци Инди правительствине пилĕк аслă держава хушшинче мире сыхламалли килĕшӳ тăвас ĕçе пуçарма чĕнет.

Индипе Пакистан хушшинчи сыхăнусем çинчен йышăннă резолюцире икĕ правительствăн пĕр тăхтаса тăмасăр хăйсем хушшинче культура, суту-илӳ тата ытти ĕçсем енĕпе йĕркеллĕ çыхăнса тăма тытăнмалла тата Кашмир халăхне хăйĕн кун-çулне йĕркелесе пыма ирĕк памалла тесе требовани лартнă.

Азири тата Çурçĕр Африкăри хирĕçӳсем çинчен йышăннă резолюцире Корейăри вăрçă пĕтĕм Азири мире хăратса тăрать, çавă США политикине пурнăçласа пынине пула сиксе тухнă вăрçă пулса тăрать, тенĕ. Резолюцире çакăн пек требовани лартнă: правительствăн хамăр çĕршыври çутçанталăк резервĕсемпе, пурлăхсемпе, çынсемпе, хамăр портсемпе тата аэродромсемпе ют государствăсен вăрçă вăрçмалли тĕллевĕсене пурнăçлас ĕçре усă курма чармалла. Çывăх вăхăтри вицĕ уйăх хушшинче политика енĕпе тĕрлĕ шухăшлă çынсен конференцийĕсене ирттермелле, çав конференцисенче Азири тата Çурçĕр Африкăри мĕнпур вăрçăсене пĕтерсе лартма тата тĕнчери виççĕмĕш вăрçă пуçланассине сирсе яма Индин мĕнле ĕçсем тумалли çинчен сӳтсе явмалла, тенĕ.

Пĕтĕм Индири Мир Совечĕн ларăвĕ хупăннă хыççăн Делири миршĕн тăракансен пысăк митингĕ пулнă. Митинга пухăннисем Пĕтĕм Индири Мир Совечĕн решенийĕсене пĕр шухăшлă пулса ырланă.

Францири миршĕн кĕрешекенсен юхăмĕ

ПАРИЖ, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Лион хулинче халăхăн пысăк пухăвĕ пулнă. Пуху çĕршывсене хĕçпăшалсăрлатассишĕн, Совет Союзĕпе тата Хĕвелтухăç Европăри ытти çĕршывсемпе çĕнĕрен суту-илӳ тума тата экономикăллă çыхăнусем тытма пуçлассишĕн кĕрешес лозунгпа, çавăн пекех Германи çарне çĕнĕрен пухнине хирĕç кĕрешме чĕнекен лозунгпа пулса иртнĕ.

«Юманите» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, пухура 25 пин çын пулнă, вĕсем çĕршывăн кăнтăрти пайĕнчи 10 департаментран пухăннă.

Францири миршĕн тăракансен Нациллĕ совечĕн председателĕ Ив Фарж пысăк сăмах тухса каланă. Вăл экономика ыйтăвĕсемпе тĕнчери çĕршывсен Мускаврa пулмалли канашлăвĕ халăхсем хушшинчи суту-илĕве тата культурăллă çыхăнусене вăйлатас ĕçре питех те пысăк усă парассине палăртнă. Франци правительстви французсен промышленникĕсене канашлăва хутшăнма чарнине Ив Фарж питленĕ.

Пухура Коргийе генерал, Пьер Кот, Пĕтĕм çĕршыври ĕççыннисен конфедерацийĕн секретарĕ Жюль Дюша, Сорбонна профессорĕ Вагнер тата ытти ораторсем сăмах тухса каланă. Вĕсем тĕнчери çĕршывсен экономикăллă канашлăвĕ пысăк вырăн йышăнса тăрасси палăртнă, çĕршывсене хĕçпăшалсăрлатассишĕн кĕрешес ĕçе вăйлатма чĕннĕ, Германин хĕçпăшаллă вăйĕсене çĕнĕрен тунине хирĕç— Франци халăхĕн пурнăçĕшĕн хăрушлăх кăларса тăратакан çара çĕнĕрен пухнине хирĕç кĕрешме чĕнсе каланă.

Юлашкинчен пуху Францине Совет Союзĕ, халăх демократи çĕршывĕсем тата ытти государствăсем хушшинче суту-илӳ тума çĕнĕрен тытăнмалли çинчен резолюцисем чылай йышăннă. Пухăва пынисем Франци парламенчĕн депутачĕсем патне çыру яма, çав çырура вĕсене Хĕвеланăç Германие хĕçпăшаллантарнине хирĕç кĕрешме тата ку ыйтупа Наци пухăвĕ йышăннă решение улăштарма чĕннĕ. Кунсăр пуçне, Франция ООН-ри хĕçпăшалсăрланас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссийĕнчи делегацийĕн членĕсем патне çыру яма йышăннă, унта атомлă хĕçпăшала чарса лартма тата çав решение пурнăçланине витĕмлĕ тĕрĕслесе тăракан контроль тума ыйтнă.

Англири ĕççыннисем хăйсен прависемшĕн кĕрешеççĕ

ЛОНДОН, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Англире ĕççыннисен пурнăçĕ начарланса пырать. Çĕршывра Англи правительстви ĕççыннисен пурнăç шайне начарлатса пынине хирĕç протестлес юхăм вăйланса пырать. Профсоюзсен вырăнти организацийĕсем ĕççĕр тăрса юлнисен йышĕ ӳсее пырассине чарса лартма çине тăрса ыйтаççĕ. Çĕршыв васкасах хĕçпăшал хатĕрлет, çавна пула ĕççĕр тăрса юлнисен йышĕ ӳсее пырать.

«Дейли уоркер» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 23-мĕшĕнче Кăнтăр Уэльсри 40 пин горняк правительство социальнăй ĕççсем валли памалли укçа хисепне чакарма шутланине хирĕç протестленĕ ятпа шăматкунсенче ĕçлеме пăрахнă. Иртнĕ шăматкун 65 шахта ĕçлемен.

Горняксен нациллĕ профсоюзĕн Дербиширти организацийĕн комитечĕ хăй йышăннă резолюцире профсоюз исполкомне правительствăран социальнăй ĕççсем валли памалли укçа хисепне чакарассине пăрахăçлама ыйтмашкăн чĕнет. Правительство социальнăй ĕççсем валли памалли укçа хисепне чакарсан, эпир шăматкунсенче ĕçлеместпĕр, тесе пĕлтернĕ горняксем. Горняксен нациллĕ профсоюзĕн Хэмстедри тата Керслири (Англин вăтаçĕрти графствисем) уйрăмĕсем те çавăн пек решени йышăннă.

Маркантонио конгресс членĕсем патне янă çыру

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри рабочисен партийĕн председателĕ Маркантонио конгресс членĕсем патне çыру янă. Унта вăл конгресс членĕсене «пурне те çар ĕçне вĕрентмелли» программăна—милитаристла программăна йышăнассине хирĕç сасăлама чĕнет.

Çав программăна представительсен палатинче февралĕн 26-мĕшĕнче сӳтсе явма тытăнаççĕ. Маркантонио çапла калать: Пĕрлешӳллĕ Штатсемшĕн хăрушсăрлăх тумалли чи шанчăклă ĕç вăл мĕнпур çĕршывсемпе мирлĕ пурăнма тытăнни пулать. Хĕçпăшалсем нумай туса хатĕрлени е пурне те çар ĕçне вĕрентмелли йĕрке туни мирлĕ пурнăç тума пулăшмасть.

Маркантонио конгреса Корейăри вăрçа халех чарса лартассишĕн тăрăшма чĕнет.

Халăхсем хушшинчи мирпе туслăха хӳтĕлекен çар

БРЮССЕЛЬ февралĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). «Драпо руж» хаçат паян Совет Çарĕ 34 çул тултарни çинчен умстатья пичетлесе кăларнă, ăна «Мире юрататакан халăхăн çарĕ» тесе ят панă.

«Гитлерла агрессие хальхи вăхăтра çĕнĕрен пуçлама ĕмĕтленекенсен нимĕçсен вăрă-хурахĕсене тĕппипех аркатса тăкни çинчен, вĕсене Сталинград патĕнчен пуçласа Германи чĕри—Берлин хули патне çитиччепех хăваласа пыни çинчен шухăшласа пăхас пулать», тесе çырать хаçат.

Статьяра ССР Союзĕ пĕрмаях мирлĕ политика тытса пынине, çав вăхăтрах Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе вĕсене пулăшакан çĕршывсем агрессиллĕ вăрçă хатĕрленине палăртнă.

Статьяра юлашкинчен: «Совет Союзĕ нимĕнле агрессиллĕ ĕç те хатĕрлемест, Совет Çарĕ вăл,—мире юрататакан халăхăн çарĕ» тесе çырнă.

Корейăри ĕççсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ февралĕн 25-мĕшĕнче фронтсенче уйрăмах паллă нимĕнле улшăну та пулманни çинчен пĕлтернĕ.

Ĕнер хĕвелтухăçĕнчи фронтра тăшман Корея Халăх çарĕн оборони çине тупăсемпе тĕлли-паллисĕр персе тăнă. Тăшманăн тип çĕр çинчи çарĕсен уйрăм чаçĕсем тата танкĕсем Корея Халăх çарĕ оборонин малти пайĕнче çапăçнă. Корея Халăх çарĕн чаçĕсем тупăсенчен вăйлă пенипе тăшман çар чаçĕсене çапăласа янă, вĕсене каялла чакарнă, çавăн чухне тăшман салтакĕсене пĕр рота таран тата 3 танк пĕтерсе тăкнă.

Америка агрессорĕсен Корейăри тискерлĕхĕ

ПЕКИН, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентстви çапла пĕлтерет:

Америка агрессорĕсем Корейăпа Китайăн тыткăна лекнĕ çар çыннисем тĕлĕшпе çĕнĕрен питĕ тискер ĕççсем тăваççĕ. Кун пирки нумай пулмасть çĕнĕ хыпарсем илнĕ. Çав хыпарсем пирки «Женьминьжибао» хаçат умстатья пичетлесе кăларнă. Умстатьяра хаçат пĕтĕм тĕнчери халăха американецсен тискер ĕççĕсене хирĕç пĕрлешсе кĕрешме чĕнет тата çав тискерлĕхсене чарса лартма ыйтас пулать, тесе çырать. Американецсем тыткăнри çар çыннисем тĕлĕшпе преступникла ĕççсем тунине хаçат нумай тĕслĕхсем илсе кăтартса парать. Тыткăнри çар çыннисем çине бензин сапаççĕ, унтан вĕсене çунтарса яраççĕ, вĕсене электричествăн яр çутă паяркисемпе куççене йăмăхтаракан çутăпа нумай çутатса тăраççĕ, çапламайсемпе çынсене суккăрлатаççĕ; тыткăнри çар çыннисен алли-урисенчи чĕрнисене тăпăлтарса кăлараççĕ; вĕсен ӳчĕсене хĕртнĕ тимĕрпе пĕçертеççĕ. Тыткăнри çар çыннисене нумайăшне уя илсе тухаççĕ те пăшалпа персе вĕлереççĕ, вĕсемпе пăшал пеме вĕренмелли мишень вырăнне усă кураççĕ.

Американецсем тыткăнри çар çыннисен лагерĕсенчи хĕрарăмсем тĕлĕшпе татах та тискертерех преступникла ĕççсем тăваççĕ. Нумай чухне американецсем малтан хĕрарăмсенчен мăшкăллани, унтан вĕсен кăкăрĕсене касса илни, алли-урисене тăпăлтарса кăларни, кайран вĕсем çине бензин сапса, чĕрĕллех çунтарса яни çинчен хаçатсем пĕлтереççĕ.

Тыткăнри çар çыннисене хупма американецсем ятарласа тĕрмесем тунă. Çав тĕрмесене çутă та, сывлăш та кĕмест, унта сывлама йывăр пăчă шăршă тăрать. Кунсăр пуçне, унта пăс ярса вĕлермелли тĕрмесем тунă. Американецсем этемле мар тискер ĕççсем тунине Америкăри «Лайф» ятлă, питĕ реакциллĕ журналăн корреспонденчĕ Джон Осборн та йышăнмасăр тăма пултарайман. Вăл Корейăри вăрçă «чи ирсĕр вăрçă» пулни, Америка салтакĕсем питĕ тискер, этемле мар хаяр ĕççсем туни çинчен çырнă,—тет хаçат.

Хаçат çакăн çинчен аса илтерет: 1951 çулхи малтанхи 10 уйăх хушшинче тыткăнри çар çыннисен Кăнтăр Корейăри лагерĕсенче, питĕ тискер ĕççсене пула, Корея Халăх çарĕн салтакĕсемпе Китай халăх добровольцĕсем 17 пин çын ытла вилнĕ; тыткăнри нумай çынсем çинче бактериллĕ хĕçпăшала сăнаса пăхнă; тыткăнри çынсенчен американецсем пин çын патнелле Англи карапĕсем çине лартса хĕвеланăçĕнчи çĕршывсене, атомлă бомбăсене сăнаса пăхнă çĕрте усă курма илсе кайнă.

Китай халăхĕ Америка захватчикĕсен Корейăри тискерлĕхне хирĕç протестлет

ШАНХАЙ, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ партисен Хĕвелтухăç Китайри тата Шанхайри пур уйрăмĕсем те заявленисем пичетлесе кăларнă. Вĕсем хăйсен заявленийĕсенче Америка захватчикĕсем Корейăра бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курнине хирĕç хытă протестлеççĕ.

Китай халăхĕн мире хӳтĕлес тата Америка агрессине хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе ĕçлекен комитечĕн Хĕвелтухăç Китайри уйрăмĕпе Шанхайри уйрăмĕ пĕрле çырнă заявление пичетлесе кăларнă. Унта Америка захватчикĕсем Корейăра питĕ тискер преступленисем тунăшăн Хĕвелтухăç Китайри тата Шанхайри пĕтĕм халăх хытă тарăхни çинчен пĕлтернĕ. Çавăн пек тискер ĕççсем туни тĕнчери халăхсен прависене, этемлĕхĕн моральне тĕрĕслĕхне пăсни пулать, тенĕ.

Китайри демократиллĕ лигăн Шанхайри уйрăмĕн заявленийĕнче те Америка агрессорĕсен Корейăри преступникла ĕççĕсене хирĕç протестленĕ. Заявленире лига членĕсем Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ атомлă, бактериллĕ хĕçпăшалсене тата халăха йышлăн пĕтерекен ытти йышши хĕçпăшалсене чарса лартасси çинчен, çавăн пек хĕçпăшалпа усă куракан çĕршывсен правительствисене çар преступникĕсем тесе шутламалли çинчен йышăннă решенине пĕр шухăшлă пулса ырлаççĕ, тесе каланă.

Бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курнинчен Америка агрессорĕ вăрçăра хăй поражени тӳснипе килĕшменни, хăйĕн агрессиллĕ вăрçине тата анлăрах сармалли ирсĕр планĕсене пăрахăçламанни курăнать, тесе çырать «Цзефанжибао» хаçат.

Малалла хаçат çапла калать: Япони захватчикĕсем Чжецзян, Хунань провинцийĕсенче тата Çурçĕр Хĕвелтухăç Китайра бактерисем сарнине пула Китай халăхĕ мĕн тери нумай асап курнине, Китай çыннисем вилсе пĕтнине Хĕвелтухăç Китайри халăх, çавăн пекех пĕтĕм çĕршыври халăх, нихçан та манас çук. Америка империализмĕ Япони захватчикĕсен çулĕпе пырать, вĕсем пекех бактериллĕ вăрçă вăрçас тактикăна—чунсăрла питĕ тискер тактикăна тытса пыма пуçларĕ.

Анчах Америка агрессорĕсем çынсен юнне тăкмалли питех те тискер преступленисем туни вĕсене пурпĕрех татăклăн поражени тӳсессинчен çăлса хăвараймĕ.

Америка империалисчĕсем Корейăра тискер ĕççсем тунине хирĕç протестлесе çырнă статьясем «Вэньгубао» тата «Синьвэньжибао» хаçатсем çинче те пичетленсе тухнă.

Англипе Америка хушшинчи хирĕçӳсем

ЛОНДОН, февралĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Англири общинăсен палатинче пренисем пуçланнă. Пренире чылай депутатсем Англире тата Британи империне кĕрекен ытти çĕршывсенче экономика тĕлĕшпе Америка пуç пулса тăрасси вăйланни вĕсене шиклентерни çинчен каланă.

Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, пренисенче Рычард Адамс лейборист сĕннĕ резолюцие сӳтсе явнă. Çак резолюцире Адамс Англие фунт стерлингпа тĕп укçа вырăнне усă куракан çĕршывсемпе тачă çыхăнса ĕçлеме сĕннĕ. Вăл правительство ют çĕршывсенчен сахалтарах тавар кӳрес тата ют çĕршывсене нумайтарах тавар сутас тĕлĕшпе йышăннă мерăсем виççĕмĕш кризисран, вăрçă хыççăнхи кризисран тухма пулăшмаççĕ, тенĕ.

Çак резолюцие Фрэнк Безуик лейборист хӳтĕленĕ. Вăл Англин хăшпĕр фирмисем Пĕрлешӳллĕ Штатсене тавар сутас тесе, США-на пĕр доллара сутмалли япалана туса хатĕрлеме икĕ доллар пĕтерни çинчен, Америка Англие сутакан таварсене туянма кирек хăçан та пăрахма пултарни çинчен каланă.

Тăхăр консерватор ячĕпе çак резолюцие тӳрлетӳ кĕртме сĕннĕ. Ку консерваторсем правительствăна уйрăм çынсене суту-илӳ ĕçĕнче государство пулăшса тăмалли «условисем» туса пама, çапла туçан, Британи империйĕнчи çĕршывсемпе фунт стерлингпа тĕп укçа вырăнне усă куракан çĕршывсене хальхи ресурсĕсемпе çутçанталăк ресурсĕсемпе пĕтĕмпех усă курма май килесси çинчен каланă.

Çак тӳрлетĕве хӳтĕлесе, Р. Рассел консерватор правительствăн таварсен хакĕсем çинчен пĕрлешсе йышăннине пăрахăçлама, вăрçă умĕнхи пекех ирĕклĕ суту-илӳ пуçламалли çинчен каланă. «Эпир Атлантика леш енчен кирек мĕнле хĕснинчен те, хушса тăнинчен те хăтăласшăн», тенĕ вăл.

Р. Рассел тӳрлетсе каланине Б. Брейн консерватор хӳтĕленĕ. Вăл çапла пĕлтернĕ: «Америка пирĕн таварсене вăхăтран вăхăта çеç туянас политика тытать. Çавăнпа та тавар хакĕсем пĕрмаях хытă улшăнаççĕ. Америка политики тарифа ӳстерет, çĕршыв таварĕсене хĕссе кăларма тăрăшать, укçа-тенкĕ çителĕксĕр пуласси пăтне илсе пырать, ют çĕршывсене нумайтарах тавар сутас ĕçре пулăшма укçа парса тăрас политика тытса пырать. Çав вăхăтрах Америка урăх çĕршывсене Британи империйĕ чухлĕ тавар сутма та та унпа ăмăртма пултараймасть. Америка урăх çĕршывсене тавар нумай сутни фунт стерлингпа тĕп укçа вырăнне усă куракан çĕршывсене хăрушлăх умне илсе пырать. Çавăнпа та, Британи империйĕ сыхланса юлтăр тесен, суту-илĕве малалла аталантармалли политика тытса пымалла, фунт стерлингпа тĕп укçа вырăнне усă куракан çĕршывсемпе çыхăнса суту-илӳ тăвас ĕçе вăйлатмалла».

Пренире государствăн экономика енĕпе ĕçлекен министрĕ Артур Солтер сăмах тухса каланă. Вăл консерваторсен тӳрлетĕвĕсене хӳтĕленĕ.

Лейбористсен резолюцине йышăнман, уншăн 66 депутат, ăна хирĕç 113 депутат сасăланă. Консерваторсен тӳрлетĕвне сасăламасăрах йышăннă.

Çурçĕр полюс районĕнче Америка авиацийĕн базине тăваççĕ

ЛОНДОН, февралĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, США сеначĕн пĕр комиссийĕн ларăвĕнче Çурçĕр полюс районĕнче Америка авиацин вăрттăн базине тума тытăнни паллă пулнă. Çав строительство мĕн тери пысăк пулни çак фактран курăнать: строительствăра ĕçлеме кайнă рабочисене çул укçи кăна 3 миллион доллар ытла тӳленĕ.

Йĕлтĕр спорчĕпе республикăра мала тухассишĕн пыракан ăмăрту вĕçленчĕ

Февралĕн 25-мĕшĕнче Атăл леш енче республикăри физкультурникĕсен ăмăртăвĕ вĕçленчĕ.

Хĕрачасенчен, 5 километра 29 минута та 47 секундра чупса тухса, «Искра» спорт обществи членĕ Свинцова мала тухрĕ.

Хĕрарăмсенчен 8 километрлă дистанцире Чкаловски районĕнчен килнĕ Абакумова пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Унăн вăхăчĕ—45 минут та 33 секунд.

10 километра 56 минут та 14 секундра чупса тухса, Жачева спортсменка пĕрремĕш вырăна тухрĕ.

Çамрăксем хушшинче 10 километрлă дистанцире Ефремов спортсмен (Етĕрне) лайăх тĕслĕх кăтартрĕ. Унăн вăхăчĕ — 50 минут та 5 секунд.

Арçынсем хушшинче 30 километрлă дистанцире мала тухассишĕн пыракан кĕрешӳ уйрăмах вăйлă пулчĕ. Дистанцире чи малтан Шупашкарти «Искра» спорт обществин членĕ Ермолаев вĕçлерĕ. Вăл 30 километра 2 сехет те 30 минутра чупса тухрĕ.

Романов (Етĕрне), Мамутин (Шупашкар) иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене йышăнчĕç.

50 километрлă дистанци ăмăрту участникĕсене те, курма пынă çынсене те уйрăмах хумхантарчĕ. Дистанци çăмăл мар. Ăна чупса тухма тӳсĕмлĕх кăна мар, пысăк спорт ăсталăхĕ кирлĕ.

...Йĕлтĕрçĕсем старта тухаççĕ. Судья команда парсанах, йĕлтĕрçĕсем çăмăллăн малалла ыткăнаççĕ.

Финиша чи малтан Михайлов («Искра») спортсмен çитрĕ. Унăн вăхăчĕ — 4 сехет те 35 минут та 46 секунд. Носов («Красная звезда») дистанцие 4 сехет те 39 минут та 46 секундра, Вишневский («Молния») 4 сехет те 41 минут та 3 секундра чупса тухрĕç.

Хуласем енĕпе ăмăртура Шупашкар хулин 1-мĕш команди мала тухрĕ. Шупашкарăн иккĕмĕш команди иккĕмĕш вырăн, Етĕрне хулин представителĕсем виççĕмĕш вырăн йышăнчĕç.

Районсем енĕпе Чкаловски команди пĕррремĕш вырăн йышăнчĕ. Канаш районĕн команди иккĕмĕш вырăна, Вăрнар районĕн физкультурникĕсем виççĕмĕш вырăна тухрĕç.

Обществăсенчен «Искра» спорт обществин 1-мĕш команди пĕррремĕш вырăна тухрĕ. «Динамо» команди иккĕмĕш вырăна, «Красная звезда» команди виççĕмĕш вырăна тухрĕç.

Мала тухнă командăсене куçса çӳрекен призсем пачĕç. Лайăх результатсем кăтартнă уйрăм физкультурниксене те хаклă парнесем тата республикăри физкультурăпа спорт комитечĕн дипломĕсене памалла тунă.

Çыхăну тытаççĕ

КУСЛАВККА. Карачри вăтам шкулта вĕренекенсем тăванлă республикăсенчи пионерсемпе çыхăну тытаççĕ. Нумай пулмасть вĕсем Карело-Финн ССР-ĕнчи Медвежегорск районĕнчи Сергиеврi çичĕ çул вĕренмелли шкулти 6-мĕш класри пионерсенчен çыру илнĕ.

Унти пионерсем хăйсен вĕренĕвĕ тата пионер дружини Совет Çарĕ кунне мĕнле хатĕрленсе кĕтсе илни çинчен çырнă. Çавăн пекех Карело-Финн республикин çутçанталăк пуянлăхĕ çинчен те çырса кăтартнă.

Карачри вăтам шкулти 6-мĕш класра вĕренекенсем инçетри тусĕсем патне ответлă çыру ячĕç. Вĕсем шкулта мĕнле вĕренсе пыни çинчен, Чăваш республикин çитĕнĕвĕсем çинчен çырса пĕлтерчĕç.

Пĕлтерни

Паян, февралĕн 27-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) хула комитечĕн парткабинетĕнче вăтам шкулсемпе техникумсенче истори вĕрентекен преподавательсем валли: «Социализмран майĕпен коммунизма куçни çинчен» ятлă темăпа лекци пулать. Лекцие А. П. Николаев юлташ вулать.

* * *

«ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» пĕррремĕш çул вĕренекен кружок руководителĕсем валли «Производствăн виçĕ уйрăмлăхĕ. Производительнăй вăйсем тата производствăллă отношенисем» тема тăрăх лекци пулать. Лекцие А. Ф. Сютруков юлташ вулать.

ВКП(б) ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧĂВАШ ГОСУДАРСТВО АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ

Паян, февралĕн 27-мĕшĕнче, каçхине чăвашла спектакль

„Ревизор“

Ыран, февралĕн 28-мĕшĕнче, каçхине чăвашла спектакль

„НАРСПИ“

Февралĕн 29-мĕшĕнче каçхине вырăсла спектакль

«ЗА ЧЕМ ПОЙДЕШЬ, ТО И НАЙДЕШЬ»

Спектакльсем 20 сехетре пуçланаççĕ.

„Родина“ кинотеатрта

Паян, февралĕн 27-мĕшĕнче, тата малаллахи кунсенче — Ют çĕршывра кăларнă фильм кăтартаççĕ

Сеанссем 12, 14, 16, 18.15, 20, 22 сехетре пуçланаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—4-17, ялхуçалăх пайĕ—3-07, пропаганда пайĕ—8-61, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00632 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.